# Олимпиадăна хутшăнмалли команда Шупашкарта йĕркеленчĕ • 4 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

49(971) №, 2016, декабрь/раштав, 17

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Шывра та путман, вăкăра та... парăнман 2 стр.

«Ар» сăмаха пула канăç çухалать 3 стр.

Кăркканa пилеш çитермелле. Упăшка ачасăр хăварасшăн 8 стр.

Хĕрарăм харăсах 8 пепке çуратнă 11 стр.

ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Халăх тарасин виçи



Юрий АРТЕМЬЕВ, филологи ăслăлăхĕсен тухтăрĕ

– Этем, темле тăрăшсан та, кулленхи пурнăçăн пур енлĕ улшăнăвĕсене сăнаса пыма ĕлкĕреймест: саланса каяс хăрушлăх пур. Тен, çавна пулах паян дилетантăнни пек çăмăл алăллă та ăшăх тĕнче курăмлă çынсем чăннипех те хисепе тивĕçлисен вырăнне йышăнас тĕллевпе çине тăма пикенчĕç: пичетре те, пухусенче те вĕсем хăйсем пирки хыттăн кăшкăрса пĕлтереççĕ. Çавсен сăн-пичĕ унта та, кунта та мĕлтлетсе илет. Эстрада юрăçисен хушшинче кама кăна курмастăн. Массăллă культура хăрушлăхĕ пирки-ха сăмахăм. Унăн сарăлса пыракан çум курăкĕ чăн-чăн культура анин çимĕçне хуплать. Манăн политика çинчен сăмахлас кăмăл пачах та çук – телекуравпа радио кунсерен, иртен пуçласа каçчен, Украинăпа аякри Сири çинчен хыпарлани-кăтартни чуна çав тери канăçсăрлантарать. Маншăн, яланах политикăран пăрăнса пурăннă çыншăн, ку уйрăмах йывăр. Паллах, политиксем, влаçри чиновниксем, журналистсем хăйсем мĕн тунине ăнланса ĕçлеççĕ. Анчах малашне те çак сулăнчăк еннелле çав хăвăртлăхпах кайсан эпир хамăр наци культурин çивĕч ыйтăвĕсем çинчен пачах манма пултаратпăр. Кунта чăн малтан литературăпа тĕрлĕ ӳнер тĕсĕсен аталанăвĕн шайĕ-пахалăхĕ /тĕшши/ пирки сăмах пырать. Чăн-чăн ăс-хакăл хуçи пулса тăракан, Турă панă пултарулăхпа ĕçлекен çыравçăсене, ӳнерçĕсемпе музыкçăсене, сцена ăстисене тивĕçлĕ хак паратпăр-и эпир? Çук! Критика çукки те – хăрушла инкек.

Авалтанах килет çирĕпленнĕ ку йăла: йăрăраххисем, сĕмсĕррисем влаç патне пуринчен малтан сукмак хываççĕ. Тĕрлĕрен ятпа награда тăпăлтарса илеççĕ. Халăхра кунашкал ятăн хисепĕ çук. Çак инкекĕн сăлтавĕ – влаçри чиновниксем творчество ĕçченĕсен йышĕнче кам-кам пуррине пĕлменнинчен килет. Ӳнерçĕн, çыравçăн, кĕвĕ-юрă ăстин пултарулăх ĕçĕнче тĕнче искусствин стандарчĕсене /калăпне/ куçран вĕçертмесĕр ĕçлес пулать. Этемлĕх культури эталон вырăнне пулмалла. Тăван халăх чун-кăмăлĕ пăсăк е примитивлă хайлавсене сивлет. Хамăртан хамăр пысăк виçепе ыйтмасан эпир малашне те «пырать пире капла, хамăра кура» тенипе çырлахса пурăнас хăрушлăх куç умĕнчех.

Тăван чĕлхене шкулта ячĕшĕн çеç вĕрентесси патне çитсе тухрăмăр. Çĕнĕ министр Юрий Исаев ку енĕпе татăклă утăмсем тăваса шанатăп. Наци культурин аталанăвĕнче кашни министрăнах хăйĕн тӳпи пур, çакна халăх тарасин виçи лайăх кăтартать. Сăмахран, çыравçăсемпе тĕл пулса калаçнă самантсенче ЧР культура министерствин çĕнĕ пуçĕ Константин Яковлев творчество интеллигенцийĕ валли пултарулăх каçĕсемпе тĕл пулусем ирттерме пӳлĕм тупас тĕлĕшпе канăçсăрланнине пĕлтерсе савăнтарнăччĕ. Паян çав пӳлĕм пур тенĕ сас-хура çӳрет. Паллах, творчество ĕçченĕсем пархатарлă ĕçшĕн ăна тав тума тивĕçлĕ.

5 стр.



Марина ТУМАЛАНОВА сăнӳкерчĕкĕ.

# Чăрăшкасси... пăтраштарать

Чăваш Республикинче пĕрешкел ятлă ял нумай. Вĕсем çинчен çитес çул ятарлă рубрика уçса çырăпăр. Хальлĕхе, Çĕнĕ çул умĕн, Чăрăшкассисене çитсе курас кăмăл çуралчĕ. Пирĕн тăрăхра сахалтан та 6 Чăрăшкасси. Унсăр пуçне Чăраш Ишек, Чăрăш Туçа, Чăрăшкас Мăрат, Чăрăшкас Хирлеп, Чăрăшлă, Чăрăшçырма... пур. Апла тăк лăсăллă çак йывăçа хисеплеççĕ пирĕн республикăра. Шупашкар районĕсем Чăрăшкасси тĕлĕшпе – чи пуяннисем: çакăнта пĕрешкел илтĕнекен висĕ ял. Вăт, шыра та туп кирлĕ çынна! Çапах Чăрăшкасси чăрăшпа çыхăннă-ши, çак йывăç унта чăнласах нумай-ши? Шăпах çакна тĕпчесе пĕлмешкĕн çула тухрăмăр та. Çула май Шупашкар районĕнче акци йĕркелерĕмĕр: «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата висĕ Чăрăшкассинчен хăшĕнче ытларах çырăнĕç?

Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 17.12 | – 14 | – 20 |
| 18.12 | – 5 | – 9 |
| 19.12 | – 12 | – 23 |
| 20.12 | – 26 | – 23 |
| 21.12 | – 6 | – 18 |
| 22.12 | – 3 | – 3 |
| 23.12 | – 2 | – 4 |

ÇЫРĂНТАРУ – 2017

«ХЫПАРА» – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ

2017 çулăн I çуррипче илсе тăмашкăн

декабрь уйăхĕн 26-мĕшĕччен

"ХЫПАРА" – 572,88 тенкĕпе,

"ХЫПАР-эрнекуна" – 279,36 тенкĕпе,

"ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ" хаçата

297,24 тенкĕпе çырăнтараççĕ



# Парăнманскер...

Çанталăкăн хитре мар тапхăр çук теççĕ те, анчах хура кĕр кунне килĕштерекен те пур-ши? Вăрман çаралнă. Уйсем пушаннă. Вĕтĕ çумăр пĕрĕхет. Упа сурчăкĕ текенни. Юр пусĕ курăнччен вăхăт самай-ха. Çавăнпах ял çынни выльăха, утkалаcа уçăлса та пулин кĕтĕр тесе, уя хăвалать. Çав кун пăру касăвĕн черечĕ Алексеевсене çитнĕ. Тури Выласем çамрăк выльăха ĕнесенчен уйрăм пăхаççĕ. Пăру-пăрăвах, мĕн кĕтмелле марри? Çуллахи пек шăрăх мар, хÿре тăратса киле тарас хăрушлăх çук. Эх, инкек хăш енчен сиксе тухасса пĕлес пулсан-и? Черете Вера пĕчченех тухса утать. Ун чухне 8-мĕш класра вĕреннĕ вăл.



Урама тухса кĕмешкĕн сивĕ мар та, уйра çÿреме çапах ăшах та мар. Çилтен пытанса хÿтĕ вырăн шыранă май аллинчи хуллине ăçта çĕтерсе хăварнине те асăрхаман хĕрача. Пăрусем ĕне кĕтĕвĕнчен малараx тавранаççĕ яла. Кĕрхи кун çерçи сăмси вăрăмĕш кăна вĕт. Хĕрача апатçимĕç тултарса тухнă сумккипе хăмсарса пăрусене килелле хăвалать. Илтнĕ-ха вăл "Праски аккасен вăкăрĕ тĕкет" тенине. Акă хайхи сумккине вăкăр еннелле сулать. Лешĕ хирĕç хăмсарать. Лару-тăрăва тĕрĕс хак парса Вера çывăхри улăм ури еннелле чавтарать. Çитсе пыратчĕ ĕнтĕ, такăнса ÿкет. Ÿкни лайăх та пулнă-и тен? Вăкăр майраки хĕрача урлă каçса кайса улăма пырса чашлаттарать. Пурăнас килет вĕт-ха, Вера сиксе тăрса улăм ури тăррине тапаланать. Ĕлĕкрех унта çилтен хÿтĕленсе каштасем хураканччĕ, каярахпа çак йăла пăрахăçа тухрĕ. Улăмран вара вăрах тытăнса тăрăн-и? Хĕрача алли шуса-шуса пырать те Вера шăп вăкăр пусĕ çине анса ларать. Тăнч! тутарать лешĕ, хĕрачана каялла – çÿлелле – вĕçтерет. Лак! тапса хăварать Вера вăкăра пусран. Аллипе татах улăмран ярса илет. Анчах каллех тытăнса тăраймасть. Тăнч! тĕксе ывăтать вăкăр татах çÿлелле. Лак! тапать Вера вĕçсе хăпарнă май. Тăнч-лак, тăнч-лак... Çур сехет мечĕкле вылять вăкăр хĕрачапа. Пурнăçпа вилĕм хушшинче кĕрешсе Вера ывăнсах çитет. Алли те текех улăмран çакланайми пулать. Мĕн тумалла? Пулăшу ыйтса пĕр чарăнми кăшкăрать, анчах та çывăххах çÿрекен кĕтÿçсем илтмеççĕ – улăм сасса çăтать. Пăхса тăрсах вилмелле-и-ха? Тарăхсах каять хайхи. Черетлĕ хут вăкăр майраки çине анса ларсан хайхискерне... икĕ хăлхинчен ярса илет. Выльăх туртăнать, Вера ямасть. Ял хĕрачи вĕт – шăнăрлă. Татах турткалашаççĕ этемпе чĕрчун. Телее, ĕнесем курăнса каяççĕ. Касу яла тавранать. Вăсене курса вăкăр ялт! туртăнать те хĕрача аллинчен вĕçерĕнсе ытти выльăх патне чупать... Хăй мĕн тери хăрушлăхран çăлăннине 15-ри хĕрача, тен, ăнланса та юлайман-тăр...

Хăйĕнпе пулса иртнĕ çакăн пек историсене /пулманнисене те/ Вера Аркадьевна, упăшки тăрăх Иванова, тем чухлех каласа кăтартма пултарать. "Пулманнисем" тесе кулăшсене каларăм: вăсене каласа кăтартас енĕпе вăл – чăн-чăн маçтăр. Ахальтен мар кирек епле ушкăна пухăннисем те яланах ун çывăхнерех вырнаçма тăрăшаççĕ. Пĕлеççĕ: Вера Аркадьевна пур-тăк – кичем пулмĕ.

## Кĕçĕнни, анчах ачашши мар

Вера Элĕк районĕнчи Тури Вылара тăватă ачаллă çемьере кĕçĕнни ÿснĕ. Анчах та ун пирки "ачашши" теме ан васкăр. Çут тĕнченех çапăçса килмелле пулса тухнă унăн. Арăмĕнчен Антонина Евгеньевнăран мăшăрĕ 10 çул кĕçĕнрех пулнă. Те юн вылянипе çыхăннă çакă, калама хĕн, анчах та Аркадий Арсентьевич тăваттăмĕш ачине кун çути кăтартасшăн пулман. Хĕрарăм 33 çулта качча тухнă. Ачи-пăчине çавăнпах-тăр çине-çинех çуратнă. "Килте икĕ карчăк, виçĕ ача. Тата тăваттăмĕшне çуратсан мĕнле тăрантарса çитерĕпĕр?" – тулхăрнă арçын. Чăваш хĕрарăмĕ упăшки каланине пăхăнма хăнăхнă. Мăнтарăн тухтăрсенчен пулăшу ыйтма больницăна çитнĕ. "Мĕн хырăм пăрахасси çинчен калаçмалли пур?! Колхозницăн çуратмалла пĕр пилĕк ача!" – хăтăрнă тухтăр. Çапла кун çути курнă Вера. Каярахпа вăл, чăн та, ашшĕн юратнă ачи пулса тăнă. "Манăн пĕртен-пĕр пепке кăна – Вера – пур", – çапла калама юратнă шăпах хайхи пепкине çуратасшăн пулман арçын. Тĕрĕссипе, тăватă ачаран ашшĕ-амăшне пăхаканни те Вера пулнă – çывăх çыннисем иккĕшĕ те унăн аллинчех ĕмĕрлĕх куç хупнă. Анчах та ку йăлтах каярахпа пулнă.

"Ялти ытти арçын пекех, сыпкалама юрататчĕ атте. Кама ан тарăхтартăр-ха ку? Эпĕ 10-мĕш класра вĕренетĕп ун чухне. Умра – экзаменсем. Пирĕн килте вара – ĕçкĕ. Чарăнми. Анне – больницăра. Хуçалăхри пĕтĕм ĕç – ман çинче. Ĕне сумалла, ытти выльăха пăхмалла, анкартинчи утта тирпейлемелле. Манăн çав вăхăтрах экзамена хатĕрленмелле тата... "Шкул хыççăнах аннене хулана илсе каятăп, хăть те мĕнле пурăн", – терĕм аттене. Çав кун вăл темиçе хутчен те çакăнма тăнă. Кÿршĕсем темиçе хутчен çăлнă, икĕ хутчен вĕрене вăхăтра хам татса ярса ĕлкĕртĕм. Анчах та çакăн хыççăн та чарăнмарĕ-ха вăл. Паллах, аннене хулана илсе тухаймарăм. Ял хĕрарăмĕ хуçалăхне пăрахса ăçта кайтăр? Черетлĕ хут хуларан тăван киле таврансан, ун чухне заводра ĕçлеттĕм, атте татах ÿсĕррине куртăм. Тытăçсах кайрăмăр унпа. Атте питĕ кĕрнеклĕччĕ, эпĕ вара пĕчĕк те çинçескер кăна. Мĕн тетĕр? Кĕрмешетпĕр, анчах та атте парăнтараймасть мана. Юлашкинчен кулса ячĕ хайхискер. Чунĕпе ырăччĕ вăл. "Çавăрса çапатăн вĕт, хĕрĕм", – терĕ. Вăт çакăн хыççăн унăн "пĕртен-пĕр ачи" пулса тăтăм та. Çав кунранпа атте те улшăнчĕ.

## "Анкарти хыçĕнче"

Верăна мĕн ачаран пакунлă çи-пуç илĕртнĕ. Анчах та çемьери çакăн пек лару-тăрура аслă шкул çинчен ĕмĕтленмелли кăна юлнă. Хĕр ЖБК заводне... электросварщика ĕçлеме вырнаçнă. Сакăрвуннăмĕш çулсем. Аслă стройкăсене ăнтăлакан çамрăксем çинчен хаçат-журнал çырсах тăрать. Романтикăпа хĕмленсе Вера та инçе çĕрсене çитсе курма ĕмĕтленет. Унăн та çĕршыва аталантарас ĕçе хутшăнас килет. Заводра 1,5 çултăлăк ĕçленĕ хыççăн хĕр тусĕпе пĕрле Владивостока тухса каять хайхи. Пĕлес килет чăваш хĕрĕн – халăхра калашле: "анкарти хыçĕнче мĕн унта?" Çапла хайхискер Рыбфлотăн II класлă матросĕ пулса тăрать. Малтан – çул çинче, унтан вĕренсе вăхăт иртет. Çакăн хыççăн карап уçă тинĕсе çур çуллăха тухса каять. 1983 çулхине Яппун тинĕсĕнче Кăнтăр Корея самолетне персе антарнине чылайăшĕ ас тăвать-тĕр. Тинĕс пек хумханать хĕр чунĕ. Ара, тĕнчери лару-тăру лăпкă мар. Тунсăх та пусарать. Унтан та ытла, хăй Владивостока тухса каяссине ашшĕ-амăшне пĕлтермен те вĕт. Киле часах пыраймассине "Чĕмпĕре командировкăна ярассине" сăлтавланă. Çапла кил туртăмĕ вăйлăрах пулнă – Вера çуралнă тăрăха çула тухнă.

Тăван заводах лаборанта вырнаçнă вăл. Аслă пĕлÿ илес ĕмĕтне çапах та пăрахман. Заводран направлени илсе палăртнине пурнăçа кĕртнĕ – ЧПУ стройфакне вĕренме кĕнĕ. Пакунлă пулас ĕмĕтне вара сывлăх тĕлĕшпе сиксе тухнă кăлтăк путлантарнă. 22 çулта пĕрремĕш курс студентки пулса тăнă Вера.

Пĕрремĕш каникултах студентсен стройотрячĕпе Улатăр тăрăхне тухса кайнă. Унтах пулас мăшăрĕпе Владимирпа паллашнă. Каччă ЭП факультетĕнче вĕреннĕ. Çултăлăкран çамрăксем çемье çавăрнă. Кĕçех йыш та хутшăннă: хĕрпе ывăл кун çути курнă.

## Дворникран – директор таран

Çакăнта Верăн хастарлăхне палăртса хăварас килет. Университетра ушкăн старости пулнă вăл, ССОра – комиссар. Вĕренÿре тăрăшуллăхпа палăрнă. Пур çĕрте те яланах малтисен ретĕнче пулнă. Анчах... 90-мĕш çулсем çитсе тăнă. Лавккасенчи пушă сентресене, çухрăм тăршшĕ талонсене те ас тăвакан пур-тăр. Каскалама-çĕлеме ятарласа вĕренмесĕрех кил хуçи арăмĕ хăйне, мăшăрне, ачисем валли янтăласа тăнă çи-пуç, хĕллехи пальто таранах çĕленĕ. Ку та юрĕччĕ, вăт декрет отпускĕнчен тухнă çамрăк хĕрарăмăн ĕçе ăçта вырнаçмалла? Ниçта та илмеççĕ кăна мар, ĕçĕ те çук. Çапла "патриотка, комсомолка, спортсменка, активистка"... 1992 çулта урам шăлма тытăнать.

"Паллакансене курсан, вăтаннипе, çурăмпа çаврăнса тăраттăм, – аса илет çав вăхăтсене Вера Аркадьевна. – Телее, çур çултан юсавпа строительство цехне штукатурмаляра вырнаçма май килчĕ. Стройкăпа çыхăннă ĕçсене питĕ юрататăп та, кунта вăтанма пăрахрăм вара. Шăпах çавăнта темĕнле професcие те алла илме пултартăм. Халĕ хам пирки çирĕппĕнех çапла калама пултаратăп: электросварщик эпĕ, штукатур-маляр, плиточник. Аллăмра болгарка та, перфоратор та, электросава та выляса кăна тăрать, циркуляркăпа та ĕçлеме пултаратăп. Хваттерте юсав ĕçĕсем ирттермелле-и? Чĕнĕр кăна – йăлт пурнăçлатăп", – çавăрттарса хурать çавăнтах шÿтлеме юратаканскер.

Пĕр вырăнта ларма пĕлменскер çапах малаллах талпăнать вăл. 6 çул склад заведующийĕнче ĕçлет. Каярахпа студент çулĕсенчи туслăх çирĕплĕхне тепĕр хут курса ĕненет – шăпах юлташĕсем пулăшнипе карьера картлашкипе



çĕклент, хулара паллă предприятин строительство енĕпе ĕçлекен директорĕ пулса тăрать.

Паянхи кун хастар çак хĕрарăм прорабра тăрăшать. Çак тытăмра нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн Вера Ивановăна кăçал "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ" хисеплĕ ятпа чысларĕç. Пурнăçĕн 22 çулне стройка тытăмне халалланă вăл. Пурнăç пĕлтерĕшне шăпах çак ĕçре çыхăнтарать. Хваттерте юсав ĕçĕсене те – пĕр шÿтлемесĕрех – пурнăçлать.

Çемьере тăваттăн ÿснĕскерсем тĕнчипех саланнă вĕсем. Вăхăтĕнче пĕри Мускавра пурăннă, тепри Крымра, виççĕмĕшĕ Каракалпакра... Нумаях пулмасть аппăшĕ Раççей тĕп хулинче хваттер туяннă та, Вера ăна пулăшма васканă. Тăванĕсем лавккана тухсан хайхи ăйă ярса илнĕ те – урăх инструмент шыраса тупайман – кухньăри хăйне килĕшмен стенана тасатса якатма пуçланă. Тусан вĕçет кăна! Çак вăхăтра хваттере кĕрсе тăнă сантехника асăрхаман та хайхи. "Чăваш хĕрарăмĕ пулĕ ĕнтĕ?" – ыйтуллăн пăхнă Вера çине хайхи юсав ĕçĕсем вĕресе тăнине курса... Хĕрарăм Мускава шабашкăна пынă тесе шухăшланă вăл.

## Арçынсем алă тытаççĕ

Чăваш арçыннисенчен хăшĕ-пĕри темшĕн хĕрарăма халĕ те картсах каясшăн мар, хĕрарăм пуслăха – пушшех те. Вера Аркадьевна бригадинче – 8 арçын. Унсăр пуçне субподряд 5 бригади тата. Нивушлĕ нимĕнле хирĕç-тăру та пулман? "Пĕр-икĕ тĕслĕх асрах, – кулать хĕрарăм. – Склад çуртне хăпартатпăр ун чухне. Вырăнти çынсем те ĕçлеççĕ. Мана плитка хуни çырлахтармарĕ. Растворĕ хытса лариччен улăштармашкăн хушса хăвартăм та хам ĕçсемпе кайрăм. Тавранатăп – плитка вырăнтах. Мĕн амакĕ? "Халиччен хытса ларнă ĕнтĕ вăл – хайпăнмасть", – ĕнентересшĕн мана рабочи. Вăл сигарет туртма тухсан кĕреçе илтĕм те тĕккелесе пăхрăм. Чиперех хăйпăнать. Хам шурă блузка тăхăннине те – директор вĕт-ха – пăхса тăмарăм, вăл кĕриччен пĕтĕм плиткăна хăйпăтса пăрахрăм. Хайхи тавранчĕ те аптăраса кайрĕ. "Манăн ыран ĕçе тухмалла мар-тăр?" – терĕ. Чăнах та тухмарĕ. Çакăн пекрех тĕслĕх Елчĕк районĕнче пулса иртнĕччĕ. Халĕ унта манпа арçынсем алă тытсах сывлăх сунаççĕ.

...Темĕн те курнă хăйĕн пурнăçĕнче Вера. Ача чухне, амăшне хÿтĕлесе макăрнăшăн, ашшĕ ăна тислĕк купи çине те кăларса лартнă. Шкул хыççăн документсем пуçтарма пуçласан больницăна кÿршĕри Вăрнара сывлăх тĕрĕслеттермешкĕн велосипедпа кайнă: 40 çухрăм унталла, 40 – каялла. Ачасемпе вăрçăлла вылянă май хăй валли те, пиччĕшĕ валли те йывăçран хитре пистолет каса-каса кăларнă. Ман чуна вара çав вăкăр историех кисретме чарăнмарĕ. "Пулăшу ыйтса кăшкăрнисĕр пуçне мĕн турăн вара ун чухне? Хăрама пĕлтĕн-и хăть? Макăртăн-и?" – ыйтмасăр чăтаймарăм унран эпĕ. "Эпĕ ача чухне те макăрман, куç хытă вырăнта манăн, – пулчĕ хурав. – Атте-анне аллăмра юлашки хут сывлаcа илсен куç шывланчĕ паллах. Иванов /мăшăрне шÿтлесе çапла чĕнет вăл/ макăртнăччĕ тата". Çук-çук, Верăн мăшăрĕ çинчен начаррине шухăшлама кирлĕ мар. Ĕçĕ пачах урăххипе çыхăннă.

Ачин сывлăхне тĕрĕслеттерме – анализсем пама – янă вăл мăшăрне. Больницăран тавăрнсан лешĕ чуна çурмалли хыпар пĕлтернĕ – ачу çултăлăк пурăнĕ тен? Тухтăр патне хăй çитсе канашламасăр та куççуль юхма чарăнман хĕрарăмăн. "Çултăлăк хушшинче ачу вилмессе шантарма пултараймастăп паллах, – хăй пекех шÿт ăсти патне çакланнă курăнать Вера. – Тен, шăпах унăн пуçĕ çине кирпĕч ÿкĕ – манăн ăçтан пĕлес, Турă мар. Анчах та сирĕн анализсем пачах та хăрушă мар. Çапла, нормăран урăхла вĕсем. Анчах та ачан организмĕн хăйне евĕрлĕхĕпе кăна çыхăннă ку". Мĕн тăвăн? Шурă курак та пулать. Анчах та çак куракăн ĕмĕрĕ хуринчен кĕскерех пулассине пачах та пĕлтермест-çке-ха ку. Иванов-ашшĕ вара тухтăра ăнланман иккен. Çавă кăна.

**Рита АРТИ.**

ИВАНОВСЕН çемье архивĕнчи сăнÿкерчĕксем.

ИНВЕСТИЦИ

# Çĕнĕ производство уçăлĕ

**ЧР Пуçлăхĕ ĕçлĕ çулçÿревпе Мускавра пулнă май юнкун «Siemens» тата «ВНИИР» компанисем килĕшĕве алă пуснă ятпа ирттернĕ савăнăçлă мероприятие хутшăннă. Малашне Шупашкарта çĕршывăмăрăн тĕп хулинчи метрополитен валли оборудовани кăларма пуçлĕç – икĕ ен SiemensSitrasDSG тата SiemensSitrasREC хатĕрсене пирĕн республикăра хатĕрлесси çинчен калаçса татăлнă.**

Асăннă пысăк технологиллĕ продукци метрополитенăн подстанцийĕсем тата хулари çĕр çийĕн çÿрекен транспорт валли кирлĕ. Производство лапамĕсем Шупашкарти «ВНИИР» ОАО комплексĕнче вырнаçĕç. Килĕшÿ çавăн пекех асăннă обществăн ĕçченĕсене çĕнĕ продукцие кăларма тата тĕрĕслеме-юсама вĕрентессине те пăхса хунă.

– Çĕнĕ производство хута яни çамрăксем валли ĕç вырăнĕ уçма та май парать, – тенĕ Михаил Васильевич.

– Паян эпир çĕнĕ шая тухатпăр. Раççейри, уйрăмах Чăваш Енри производствăна сарма тытăнатпăр. Сирĕн республикăра инвестици валли ырă климат йĕркеленине, ют çĕршыври инвесторсене илĕртме тĕрлĕ мел шыранине палăртма кăмăллă, – тенĕ «Мобильность» департамент директорĕ Йорг Либшер.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

ÇĔНĔ ПРОЕКТ

# Шупашкарта – планетари

ЧР Министрсен Кабинечĕн эрнесерен иртекен канашлăвĕнче республикăра планетари тăвас ыйтăва та сÿтсе явнă. Ăна шăпах ăста хăпартасси ыйту çуратнă: Шуршăлти А.Николаев космонавт-летчик мемориал комплексĕнче е Шупашкарти А.Николаев ячĕллĕ ача-пăча паркĕнче?

ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертÿçи Юрий Васильев бюджет укçипе май пур таран тухăçлă усă курмаллине, чи малтанах республикăри çынсен интересĕсене мала хумаллине каланă.

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков пĕлтернĕ тăрăх, космонавтăн мăшăрĕ Валентина Терешкова планетарие Шупашкарта тутарасшăн. Пур шухăша итленĕ хыççăн планетарие Шупашкарта çĕклеме палăртнă.

Вăл нумай функциллĕ пуласса шанаççĕ. Унта интерактивлă музей, кинолекципе çăлтăр залĕ, тĕрлĕ кружок пÿлĕмĕсем... пулмалла. Малтанах палăртнă тăрăх, пысăк комплекса хулан юбилейĕ тĕлне 2019 çул валли вĕçлемелле.

Хула администрацийĕ пĕлтернĕ тăрăх, А.Николаев ячĕллĕ ача-пăча паркĕн директорĕ ку тĕлĕшпе опыт пухма ытти планетарисене: Чул хулапа Мускава – çитсе килнĕ-мĕн. Сăмах май, Мускаври планетари Раççейре – чи асли. Вăл çĕршывĕпех пысăккисенчен пĕри. Усне чухне вăл пирĕн çĕршывра – пĕрремĕш, Европăпа тĕнчере вунвиççĕмĕш пулнă.

**Татьяна НАУМОВА.**

ПУЛĂМ

# Аттепе аннерен хакли çук

**Раштав уйăхĕн 13-мĕшĕнче Раççейри – Кино, Чăваш Енри Ĕç çыннин çулталăкне пĕтĕмлетсе, çĕршыври – Экологи, республикăри Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкне кĕтсе илме хатĕрленсе савăнăçлă уяв ирттернĕ. Унта ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă.**

Çакна та палăртмалла: 2016 çулта Раççей тата наци кинематографийĕнчи çитĕнÿсене халăх хушшинче сарса пысăк проектсем пурнăçланчĕç. Улатăрта, Çĕмĕрлере, Канашра кинозалсем уçăлчĕç. Çывăх вăхăтрах Çĕрпÿсене, Сĕнтĕрвăррисене, Вăрнарсене савăнтарĕç. Халĕ кино курма республикăн тĕп хулинче пурăнакансен çеç мар, ял халăхĕн те мĕнпур май пур темелле.

– Пирĕн хастар ĕçченсем, ветерансем, асаттесемпе мăн асаттесем çĕршыва вăрçă хыççăнхи çулсенче çĕнетсе ура çине тăратнă. Çавна май пĕтĕм тĕнчене Раççей мăнаçлă çĕршыв иккенне ĕнентернĕ. Пирĕн тĕллев – тăван çĕршыва чунĕпе парăннă ĕç çынни çинчен ырă шухăш-кăмăл хывасси.

Çемье – кашни çын пурнăçĕнчех тĕп вырăнта. Çемье йăли-йĕркине упрамалла, пĕчĕк тăван çĕршыва та атте-аннене савнă пек юратмалла, тăнăçлăхпа килĕшÿре пурăнмалла. Нумай ача çуратса вĕсене граждансен туса çитĕнтерекен аннесемпе аттесене уйрăм тав сăмахĕ калатăп, – тенĕ Михаил Васильевич.

Раççей халăх артисчĕ Александр Михайлов уява пухăннисене саламланă май регион ертÿлĕхĕ 2017 çула Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкĕ тесе палăртнă туни çав тери пахине каланă.

– Аттепе анне пиртен кашнийĕншĕнех чи пĕлтерĕшлĕ çынсем. Шăпах вĕсем пире пуринчен ытларах юратаççĕ. Чун-чĕрине пама хатĕрскерсем куншăн пиртен нимĕн те ыйтмаççĕ. Вĕсемех пире халăха, çĕршыва савма хăнăхтараççĕ. Амăшĕсемпе Ашшĕсен канашĕн пĕрлехи ĕçĕ хăйĕн çимĕçне те пачĕ: Чăваш Ен федерацин Атăлçи тăрăхĕнче çемьесем арканасси чакнипе иккĕмĕш вырăнта. Шанатпăр: малашне тата пысăкрах çитĕнÿсем тăвăпăр, – палăртнă ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, республикăри Ашшĕсен канашĕн председателĕ Владимир Викторов.

2017 çула Амăшĕсемпе Ашшĕсене халалламашкăн республикăри Хĕрарăмсен союзĕ сĕннĕ. Унăн председателĕ Ольга Зайцева çемье пахалăхне çамрăксен хушшинче ытларах сарасси тĕп вырăнта тăмаллине аса илтернĕ.

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов вара чăваш халăхĕн аслисене, атте-аннене, йăла-йĕркене сума сăвас ырă йăла пуррине палăртнă.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**



САМАХ ПАРĂР-ХА

# «Ар» сăмаха пула канăç çухалать

Марина ТУМАЛАНОВА

**Иртнĕ эрнере Етĕрне районне командировкăна кайнăччĕ. Пĕр хĕрарăм лавкка алăкĕ çине пĕлтерÿ çыпăçтарса хăварнă. Вăл пытяк сутасшăн иккен. Республикăн кăнтăр енчи чăвашах ăна ăнланмасан та пултарать. Эпĕ, çак тăрăхран инçех мар çуралнăскер, путек пирки сăмах пынине ăнланса илтĕм паллах.**

**Хулана килсен кашниех литература чĕлхипе хутшăнма вĕренет. Пĕрре, яла кайсан, урăхла, кĕнеке чĕлхинчи сăмахсемпе калаçса кăтартрăм. «Ан курнăçлан», – терĕç хамăр ялсем. Çакăн хыççăн тăван тăрăха тавrăнсан хăнăхнă сăмахсемпех усă куратăп. «Чăвашла икĕ тĕрлĕ калаçма пултарать», – теççĕ ман пирки тăвансемпе телефон урлă хутшăннине пĕрре мар илтнисем.**

**Етĕрне районĕнчи Ирçепе Кăташ юнашарах вырнаçнă, пĕр ял тăрăххех кĕреççĕ. Апла пулин те вăл е ку ял çыннине тÿрех уйăрса илме пулать. «Килеччĕ», «каяччĕ», – теççĕ, тĕслĕхрен, Кăташсем. Çакна тавраристем йĕркеллех йышăнаççĕ.**

**Сăмах çумне «ке» татăк хушас килет пирĕн. Тĕслĕхрен, «мĕншĕн» мар, «ма-ке» е «ме-ке». «Ме-ке-кек» тесе тăрăхлакансем те пурччĕ студент чухне. Кăнтăр районĕнчен килнĕ тантăшсем, ахăртнех, тури чăвашсем калаçнине илтмен. Пирĕн патри лапра /пылчăк/, тăркăш /тусан/ сăмахсем те çук литература чĕлхинче.**

**Пушкăрт ялĕ Мари Республики çывăхĕнче вырнаçнă. «Пирĕн калаçури хăш-пĕр сăмаха ăнланас çук эсĕ», – тенĕччĕ ял çыннисем командировкăна кайсан. Пĕр сăмахĕ те ют мар маншăн. Тахçан малтан çакăнта çĕвĕ цехĕнче йышлăн ĕçленĕ. Ирçе ял хĕрарăмĕсем валли те вырăн тупăннă унта. Кам пĕлет, тен, вĕсем çĕнĕ сăмахсене тăван тăрăха илсе килнĕ?**

**«Килте арпа килĕштерсе пурăнатăн-и?» – ыйтать çул çинче пĕр арçын. Çухалсах кайрăм – мĕн пирки калаçать вăл. «Ар сыхăнăвĕ» тенине илтнĕ-ха. Хама ура тĕпĕнчен пуçласа пуç тÿпине çитиччен пăхрăм – йăлтах йĕркеллĕ пек. Арçынсене астармалла тумланман, ман çума çыпăçмалла мар пек», – каласа кăтартать Шупашкар районĕнчи ача садĕнче ĕçлекен пĕр воспитатель. Арпа арçын пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулнине ыйтса пĕлсен тин лăпланнă вăл. Ырă шухăшпах калаçу пуçарнă унпа çав çын.**

**Чăваш чĕлхи, чăнах, питĕ пуян. Турипе анатрин хăйнеевĕрлĕ калаçăвне илемлĕ литературăра кăтартни те тĕл пулать.**

**Çак кунсенче вара республикăна ырă хыпар саралчĕ: И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студентки Александра Прокопьева культура еткерлĕхĕпе, экологипе, пурнăç хăрушсăрлăхпе çыхăннă ыйтусемпе йĕркеленĕ Пĕтĕм Раççейри çамрăксен «ЮНЕСКО – 2016» форумĕнче çĕнтернĕ. Хальхи чăваш чĕлхине тĕпчени, хăш-пĕр вырăнта тĕл пулакан сăмахсене кĕртни ăна мала тухма пулăшнă. Историпе филологи факультечĕн 4-мĕш курс студенткине I степень дипломпа тата «Студентсен наука чи лайăх ĕçĕ» медальпе наградăланă. Форумра çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи çамрăк ăсчахсем хăйсен ĕçĕсемпе паллаштарнă. Çак мероприятие Патшалăх Думи, РФ Вĕренÿпе наука министерстви, РФ Транспорт министерстви, РФ Ял хуçалăх министерстви тата ыттисем йĕркелеме пулăшнă.**

**Александра Прокопьева хăйĕн наука ертÿçипе, Алина Ахвандерова доцентпа, пĕрле «Хальхи чăваш чĕлхинчи хăш-пĕр вырăнти калаçу» тĕпчев хатĕрленĕ. «Çакнашкал сăмах нумай та мар, çакă темиçе çĕр çуллăх хушшинче пулса иртекен чĕлхен истори аталанăвĕпе çыхăннă», – ăнлантарать студентка. Нумай тĕслĕх илсе кăтартнă вăл. Сăмахран, Вăрмарсен калаçăвĕнче «л» сас палли сиксе юлать /сапла – çапа/.**

**«Çак тĕпчев наци шкулĕсенче тăван чĕлхене ăша хывакансене кирлĕ пулĕ. Наука ĕçĕ хатĕрленĕ май вĕрентÿ программинчи диалектологипе çыхăннă материал калăпăшне пысăклатмалли çинчен ыйту çĕклес патне çитрĕм. Шкул ачисене те тĕпчев ĕçне явăçтармалла. Вĕренекенсен урокра хăйсем тупнă сăмахсемпе усă курма май пулĕ. Çакă чăваш литературара чĕлхине йĕркелес тĕлĕшпе те пулăшĕ», – палăртать Александра Прокопьева.**



ХĔРАРĂМСЕН КАНАШĔНЧЕ

# Тĕнчери тăнăçлăхшăн

**Раççей тата Беларуç Хĕрарăмĕсен пĕрлĕхĕсем тахçанах туслă çыхăну тытаççĕ, пĕрлехи мероприятисем, "çавра сĕтелсем", куравсемпе фестивальсем ирттереççĕ. Курăмлă пулăмсем умĕн: Раççейпе Беларуç пĕрлĕхĕ – 20, НППП – 25, Раççей Хĕрарăмĕсен союзĕ – 25, Беларуç Хĕрарăмĕсен союзĕ кĕçех 25 çул тултарас умĕн Мускавра раштавăн 8-мĕшĕнче хăйне евĕр Форум иртнĕ. "Хĕрарăмсем – ырă вăйсене тĕнчери тăнăçлăхшăн пĕрлештерессишĕн" мероприятие ирттерме Беларуç хĕрарăмĕсем сĕннĕ, Раççей ăна ырласа йышăннă.**

Мускава пирĕнпе туслă çĕршывран хĕрарăмсен ушкăнне Союз ертӳçи, Беларуç Республикин Наци пухăвĕн Канашĕн председателĕн заместителĕ Марианна Щеткина ертсе килнĕ.

Форума пухăннисене Раççей Хĕрарăмĕсен союзĕн ертӳçи Екатерина Лахова, Беларуç енчен – Марианна Щеткина тата Союзла патшалăхăн госсекретарĕ Георгий Рапота саламланă.

Форум тухăçлă ĕçленĕ. Икĕ енчен те пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарнă. Каласа кăтартмалли, мăнаçланмалли чăваш хĕрарăмĕсен те сахал мар. Пирĕн республикăри пĕрлĕх уйрăмах грант мелĕпе хастарлăхпа палăрать. Палăртнине пурнăçламашкăн çĕршыв шайĕнчи Союзпа тачă çыхăнса ĕçлени пулăшать. Чăваш хĕрарăмĕсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки пĕрлĕх ертӳçи Ольга Зайцева каласа кăтартнă.



Форум ĕçне патшалăх, общество паллă деятелĕсем, РФ Патшалăх Думин депутачĕсем, сенаторсем, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен çитнĕ хăнасем, Хĕрарăмсен союзĕсен хастарĕсем хутшăннă.

Пухăннисем Раççей тата Беларуç Хĕрарăмĕсен союзĕсен Декларацине йышăннă.

# Черетлĕ проект гранта тивĕçнĕ



**Общество çак организацийĕ хăйĕн ĕç-хĕлне грант мелĕпе аталантарса пырать. Хальхинче хĕрарăмсен "Наци тата культура йăли-йĕркине упраса хăварасси, амăшĕнчен хĕрне парса хăварасси" куçса çӳрекен куравĕ патшалăх грантне тивĕçнĕ. Чăваш хĕрарăмĕсен проектне Пĕчĕк хуласемпе ялсенче пурăнакансен гражданла хастарлăхне аталантарма пулăшакан "Перспектива" фонд ырланă. Укçа-тенкĕпе, РФ Президенчĕ алă пуснă хушупа килĕшӳллĕн, патшалăх хыснинчен тивĕçтерĕç.**

Асăннă курав – хĕрарăмсем виçĕ çул каялла кун çути кăтартнă, унтанпа çине-çинех усă куракан проект тăсăмĕ. Курав экспозицийĕпе Чăваш Енре Хĕрарăмсен союзĕ ирттерекен кирек те хăш мероприятире те паллашма пулатчĕ. Унăн экспоначĕсем Раççей Общество палатинче иртнĕ Чăваш Республикин кунĕсенче те тивĕçлĕ вырăн йышăннă.

Чăваш Республикинчи хĕрарăмĕсен созюзĕ хăй пурнăçласа пыракан темиçе проекта пĕрлештерме йышăннă: "Чăваш Ен – халăхсемпе культура пĕрлĕхĕ", "Çемье – кашни çыншăн тĕп вырăнта". Çакă грантпа тивĕçекен укçа-тенкĕпе тата тухăçлăрах усă курмашкăн май парать.

Куçса çӳрекен курав халăх йăли-йĕркине чĕртсе тăратса упраса хăварма пулăшать. Экспонатсене республикăн тĕрлĕ районĕнче пурăнакан тĕрлĕ ӳсĕмри хĕрарăмсем хатĕрленĕ. Курав вăхăтĕнчех ăсталăх класĕсем ирттерме палăртнă. Çавна май курава пынисем унти экспонатсене курнипе кăна çырлахмĕç, ĕç процесĕпе паллашма, хăйсен ăсталăхне тĕрĕслесе пăхма пултарĕç. Унтах тĕрлĕ районти халăх театрĕсемпе фольклор коллективĕсен пултарулăхпе паллашма май пулĕ. Проекта çавăн пекех "Классика" академи капелли халăх юррисемпе хутшăнать – курав тĕллевĕ шăпах халăхра сыхланса юлнă пуянлăхпа паллаштарасси-çке.

Курава вĕçĕмсĕр ĕçлеттерме, экспонатсене улăштарса тăма палăртнă.

Курава йĕркелӳçĕсем Шупашкарта 2017 çул уçма хатĕрленеççĕ – ăна Чăваш Республикинчи Хĕрарăмсен союзĕ йĕркеленнĕренпе 90 çул çитнине халалланă.

**/Хамăр инф./.**

# Çĕнтерӳсем вĕçленмен-ха...

**Пирĕн республикăн спорт историйĕ çав тери анлă та пуян. Чăваш хĕрĕсемпе арĕсем, пикисемпе яшĕсем, ачисем тĕрлĕ шайри ăмăртура палăраççĕ. ЧР Пуçлăхĕн парнисене çĕнсе илессишĕн хĕрарăмсен хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе Раççей уçă кубокĕ йĕркелени те куракан шăн çĕнĕлĕх мар. Вăл пирĕн патра тăваттăмĕш хутчен иртет. Иккĕмĕш çул хăйне май шоу евĕр йĕркелеççĕ ăна.**

Икĕ куна тăсăлнă ăмăрту кĕрешĕве кăмăллакансене «Шупашкар-арена» пăр керменне пухрĕ. Виççĕмĕш вырăншăн тупăшакансемпе çĕнтерӳçĕ ята тивĕçес тĕллевлисем кавир çине шăматкун тухрĕç. Финал тытăçĕвĕсене хутшăнакансене саламлама сумлă хăна пухăнчĕ.

– Шăпах Шупашкарта, шăпах кунта Рио-де-Жанейрори Олимпиадăна хутшăнмалли команда йĕркеленчĕ. Пирĕн федераци 9 медаль çĕнсе илчĕ, хĕрсем тĕнчипе 2-мĕш вырăн йышăнчĕç. Ку вара – чаплă кăтарту, – терĕ Раççейри спорт кĕрешĕвĕн федерацийĕн пĕрремĕш вице-президенчĕ Омар Муртузалиев ăмăртăва çӳллĕ шайра хатĕрленишĕн тав туса.

Кубока уçнă май юпа уйăхĕнче Турцире студентсен хушшинче иртнĕ тĕнче чемпионатĕнче палăрнисене Раççей спорт кĕрешĕвĕн федерацин премийĕсемпе чысларĕç. Вĕсен йышĕнче Канаш районĕнче çуралса ӳснĕ Вероника Чумикова та пулнине палăртма кăмăллă.

Раççей уçă кубокĕ чăваш çĕрĕ çинче çĕршывăн 21 регионĕнчен тата ултă ют çĕршывран çитнĕ спортсменсене хапăлласа йышăнчĕ. 132 хĕртен кашниех хăйĕн вăйне, паттăрлăхне, хастарлăхне кăтартма ăнтăлчĕ. Медальсен салатмалли 8 комплекчĕ çеç çав – пурне те тивĕçмест. Чăваш Ен чысне 9 спортсмен хӳтĕлерĕ. Шел, финала пĕри те çитеймерĕ. Вероника Чумиковăпа /58 килограмчченхи ушкăнра/ Мария Кузнецова /63 килограмчченхи виçере/ виççĕмĕшсем пулчĕç. 60 килограмчченхи виçере кĕрешекен Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастерĕ, пилĕк хутчен Европа чемпионки, Олимп вăййисене хутшăннă Наталья Гольц ылтăна тивĕçрĕ-ха, анчах кавир çине тухмарĕ. Унпа тупăшмалли Беларуç пики малтанхи кĕрешӳре урине амантнăран тӳрех парăнчĕ. Наталья пĕлтĕр ку ăмăртура кĕмĕле тивĕçнĕччĕ.



● ИННА АШШĔПЕ /СЫЛТĂМРИ/ ТАТА БОРИС ЧЕРНОВ ТРЕНЕРПА.

Тепĕр ентешĕмĕр çинчен те каласа хăвармалла. Канаш районĕнче çуралса ӳснĕ Алина Морева халĕ Брянск облаçĕн чысне хӳтĕлет. «Анне» ята тивĕçнĕскер кавир çине нумаях пулмасть çеç таврăннă-ха, апла пулин те кĕмĕл медале çĕнсе илме пултарчĕ.

Эпĕ вара кавир çине Инна Тражукова тухасса чăтăмсăррăн кĕтрĕм. Вулакана хĕр Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Ирçел ялĕнче çуралса ӳснине аса илтерес килет. Кăçал Олимпиадăна та хутшăнма тивĕçнĕскер финала тухассинче пачах иккĕленмерĕм.

Инна кавир çине тухсан манран аяккках мар вырнаçнă ашшĕ çине те куç хĕррипе те пулин пăха-пăха илтĕм. Унăн хусканăвĕсенче вăл хĕрĕшĕн хумханни, пăшăрханни малтанах палăрмарĕ-ха, тытăçу вăй илсе пынă май вара çирĕп кăмăллă арçын та пăлханнине пытараймарĕ. Аякран курăнарах парать-тĕр, çавăнпах вăл тĕпренчĕкне сĕнӳпе те пулăшасшăн пулчĕ. Темиçе хутчен те: «Уруна сыхла!» – тесе кăшкăрчĕ. Чĕмпĕр облаçĕнчен килнĕскер çĕнтерни микрофонпа пĕлтеричченех табло çинчи шутран курăнчĕ. Вячеслав Александровичпа пĕрлех юнашар вырнаçнă ентешĕсем те хĕрӳллĕн алă çупма, «Маттур!» тесе кăшкăрма тытăнчĕç. Эпир те савăк кăмăла палăртмасăр чăтаймарăмăр. Юнашар ларакансем нимĕн те ăнланмарĕç курăнать – ыйтуллăн пăхрĕç. Чăваш хĕрĕ çĕнтернине систерсен çеç икĕ хĕрарăм аллине тата хĕрӳллĕрех çупрĕ.

* * *

Ăмăрту вĕçленсен Вячеслав Александровичпа калаçма май килчĕ.

– Кашни ăмăртăвах пĕрле çӳреме тăрăшатăп. Хĕре эпир ялан пĕрле иккенне систерсе хавхалантарас килет. Инна кĕрешме тухиччен, паллах, паян та пăлхантăм. Халĕ чунра савăнăç çеç. Эпĕ юнашарри ăна вăй хушнине шанатăп.

Инна кĕрешӳре 12 çул ĕнтĕ. Ача чухне эпĕ арçын ачасемпе секцире епле ĕçленине курма пыратчĕ. Пурте пĕрле вылятчĕç, чупатчĕç. Каярах Инна та кĕрешме тытăнчĕ. Арçын ачасемпех тупăшатчĕ.

**– Хĕре шел пулмарĕ-и?**

– Эпĕ ăна нихăçан та шеллемен. Унран ыттисенчен те нумайрах ыйтнă. Çакна курса ыттисем туртăнччăр, итлеччĕр тенĕ.

**– Светлана Викторовна çапах та хĕрхенет-тĕр? Кĕрешнĕ май кĕлеткене темле те хиреççĕ-çке.**

– Хĕрарăм чунĕ çемçерех çав. Амăшĕ халĕ те шеллет ăна. Йĕрет те. Пăшăрханăвĕ те расна унăн. Кĕрешӳ тĕшшине те мăшăр Инна секцие çӳреме тытăнсан тин ăнланчĕ.

Хĕрĕмĕр çитĕнĕвĕсем савăнтараççĕ паллах. Ăна çăмăл маррине те пĕлетпĕр. Виçĕ çул харăс Раççей чемпионĕ, Раççей Кубокĕн чемпионĕ пулса пырать. Ку питĕ йывăр. Ята тытса тăмалла вĕт. Пĕр çул ăнăçсан та тепрехинче темĕн те сиксе тухать. Çавăнпах ку – спорт. Пысăк шая хăпарасси те ансат мар, чемпион ятне сыхласси – пушшех, – шухăш-кăмăлне палăртрĕ тренер-ашшĕ.

– Ирĕклĕ кĕрешĕве Чĕмпĕр тăрăхĕнче те сарнинче манăн тивĕç те пур ахăр. Славăна хăйне эпĕ хатĕрленĕ. Вăл манăн малтанхи вĕренекенсенчен пĕри. Каярах вăл хăйсен ялĕнче ĕçлеме тытăнчĕ. Майĕпен-майĕпен çӳллĕ шая тухса пытăмăр. Иннăн çитĕнӳсем пулма тытăнсан ăна Мускаври олимп резервĕсен шкулне яма йышăнтăмăр, – Иннăна кĕтнĕ май сăмах пуçарчĕ Борис Чернов тренер.

Ăмăрту вĕçленнĕ-вĕçленмен /тивĕçнĕ парнесене илсенех/ чылай спортсмен пуйăса çитме васкарĕ. Вăл шутра – Инна та. Çапах «Чăваш хĕрарăмĕн» вулаканĕсем валли икĕ-виçĕ сăмах калама вăхăт тупрĕ.

– Тăвансене, пĕлĕшсене тепĕр хутчен савăнтарма пултарнишĕн хĕпĕртетĕп. Хăшĕ-пĕри мана пăрахăçлама тăрăшать. Çавсене хирĕçлесе манăн çĕнтерӳсем вĕçленменнине тепĕр хутчен кăтартрăм. Çакă та кăмăлăма уçать. Çулталăк ăнăçлă вĕçленет. Çакă та ырă хыпар, – кăмăлтуйăмне кĕскен палăртрĕ вăл сыв пуллашнă май.

**Татьяна НАУМОВА.**

Александр ВРАЖКИН сăнӳкерчĕкĕ.

ÇĔНĔ ÇУЛ УМĔНХИ ÇУЛÇÛРЕВ

# Чăрăшкасси... пăтраштарать

### Сывлăх сунакансем

Ишек тăрăхĕнчи Чăрăшкассинчи вăтам шкул йĕри-тавра чăрăш ÿсет. 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче лартнăскерсем тÿпенелле кармашаççĕ. Йĕкелĕсем тетте пекех курăнаççĕ. 11-мĕш класс ачисем çак йывăçпа çыхăннă ыйтусене хаваспах хуравлама килĕшрĕç. Чăрăш миçе çул пурăнать? Тĕрĕсех, 250-300 çула çитиччене тавралăха илем кÿрет вăл. Хăшĕ-пĕри, вăрăм ĕмĕрли, 600 çула çитет. Йывăç сывлăша тасатни, унăн лăсси тĕрлĕ чир-чĕре çĕнтерме пулăшни çинчен калаçрăмăр. Шкул директорĕ Ирина Гаврилова çирĕплетнĕ тăрăх, юлашки вăхăтра ял тавраш ĕнче чăрăш мар, хыр, хурăн ытларах лартаççĕ.

«Манăн тĕп тивĕç – тăван халăхăн культурине аталантарасси, йăх-несĕлĕн йăлийĕркине упраса хăварасси. Çакăнти халăх çав тери туслă. Сăмахран, ял уявне пысăк йышпа паллă тăватпăр», – палăртать чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕ Алина Николаева. Экспромт мелĕпе сăвă çырма ăста вăл. Унăн вĕренекенĕсем «сывлăх сунатăп», «ырă кун», «чипер кайăр» теме пĕлеççĕ.

«Районти Чăрăшкасси ялĕсене пăтраштарни тăтăшах пулать. Пĕрре пирĕн пата çул проектне хатĕрлекенсем килсе тухрĕç. Вĕсен кунта мар, теприне каймалла пулнă. Е çĕр пăхма килеççĕ. Хăйсем урăх çĕрте калаçса татăлнă иккен. Çапла çаврăнса çÿресен палăртнă вырăна час çитейĕн», – тет Чăрăшкасси ял администрацийĕн пуçлăхĕ Виталий Павлов.

Тĕслĕхрен, суйлав вăхăтĕнче кандидат Чăрăшкассисемпе тĕплулу йĕркелеме палăртать. Пĕлтерÿ вуланă хыççăн халăх пуçтарăнать, анчах депутата суйланма шухăш тытни килмест. Вăл тепĕр Чăрăшкассине çул тытнă-мĕн.

Виталий Яковлевич Чăрăшкасси çумне тепĕр сăмах хушма сĕнет. Ун пек çынсем пăтрашăнмĕччĕç, каллĕ-маллĕ çÿресе вăхăт ирттермĕччĕç.

Ял халăхĕ пĕрин хыççăн тепри «Чăваш хĕрарăмĕ» çырăнчĕ. Ольга Алексеева почтальон хаçат сĕнсен хирĕçлекен пулмарĕ. «Малтан вырăс кăларăмĕсене илеттĕмĕр, халĕ, çулсем иртнĕçемĕн, чăвашла вулас килет», – йăл кулăпа ăсатса ячĕç пире садик ĕçченĕсем.

### «Чикаго»

Кÿкеç çывăхĕнчи Чăрăшкасси, федераци çулĕ патĕнче вырнаçнăран, яланах куç тĕлне пулать.

«Ячĕ кăна мĕне тăрать. Илемлĕ вырăнта вырнаçнă. Çак яла висĕ пĕчĕк çырма темиçе пая пайлама тăрăшнă пулмалла, анчах та вĕсен вăйĕ çитеймен. Висĕ тататкран тăраканскер ерипен пысăкланнă, сарăлса пынă, пĕр ял пулса тăнă. Халĕ вăл çÿлтен пăхсан «П» саспалли евĕрлĕ курăнать, висĕ урамран тăрать. Пĕр висçĕр çул ĕлĕкрех кунта чăтлăх – хырлăхпа чăрăшлăх – кашланă», – çырать Чăрăшкасси çинчен хатĕрленĕ кĕнекере Леонид Павлов тавра пĕлÿçĕ. Малтан Токаш ятлă пулнă-мĕн çак ял.

Унтанпа йывăççене касса, кăкласа пĕтернĕ. Халĕ çул хĕррипе кăна чăрăш пăт-пат курăнать.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш, 90-мĕш çулĕсенче çамрăксем çак вырăна «Чикаго» ят панă. Кунта ташă касне хĕрсемпе каччăсем тавраран пуçтарăннă. «Чикаго» тенине такси водителĕсем те хăнăхса çитнĕ-мĕн. Сăмах май, халĕ Чăрăшкассинчи «Чикаго» спорт команди тĕрлĕ шайри ăмăртусенче мала тухать.

Фельдшерпа акушер пункчĕн санитарки Нина Веселова йĕплĕ çак йывăça чăваш кил тавраш не мĕншĕн лартманнине ăнлантарса пачĕ: ăна пула кил хуçин ĕмĕрĕ ирех татăлма пултарать-мĕн. Унсăр пуçне çав килте тĕпленнисем йĕп çинчи пек канăçсăр пурăнаççĕ имĕш. Çавăнпах хăшĕ-пĕри лăсăллă çак йывăça кил картишĕнчен е пахчаран урама кăларма тăрăшать, май килмесен касса пăрахать.

Иртнĕ эрнере Кÿкеç çывăхĕнчи Чăрăшкассисен эмел ещĕкĕ районĕпех çаврăннă. Ишлей райпо водителĕ ăçта леçмеллине тÿрех ăçтан тавçăрса илтĕр? Юрать-ха аптекăна вăхăтра çитернĕ ăна.

Ял библиотекине «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат килменни мана тĕлĕнтерчĕ. Мĕнле-ха капла? Ытти вулавăшра илсе тăраççĕ, кунта вара – çук. Кăмăл хуçăлнине тÿрех ăнланчĕ Елена Иванова библиотекарь. Хаçат çырăнмашкăн самантрах укçа туртса кăларчĕ вăл. Çитес çул вулавăшра та «Чăваш хĕрарăмĕпе» паллашма май пулĕ.

«Пĕрре хĕлле арçынпа хĕрарăм çăмăл машинăпа килсе чарăнчĕç. Сайтри пĕлтерÿ тăрăх клубри мероприятие килнĕ вĕсем. Халăх пуçтарăнманшăн кăмăлсăрланнă. Эпир клуб ĕçченĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр. Çав вăхăтра нимĕнле мероприяти те ирттерме планламаннине лайăх пĕлетĕп. Çав çынсен тепĕр Чăрăшкассине каймалла пулнă иккен», – черетлĕ тĕслĕх илсе кăтартрĕ Елена Геннадьевна. Халĕ клуб ĕçченĕсем районти Хĕл Мучипе Юр пике конкурсне тĕплĕ хатĕрленетчĕç.

Людмила Николаева почтальон Кÿкеçрен Чăрăшкассине 40 минутрах утса çитет. Сунарçă пăшалтан тĕл пенĕ пекех кампа сăмах пуçармаллине хăнăхса çитнĕ вăл. Пирĕн юлташсем тупăнсах пычĕç. Çапах икĕ сехетре хăшĕсене ытларах хаçат çырăнтарма май килĕ-ши? «Чăрăшкассисем яланах малта пулнă», – акцие хутшăнакансенчен нихăшĕ те хыçа юласшăн мар.

### Лапамра, Кăкшăм шывĕ патĕнче

Светлана Турова почтальонăн ĕç кунĕ 6 сехет те 30 минутрах пуçланать. Шупашкартан çÿрекенскер куллен 24 çухрăм хыçа хăварать. Юрать-ха çăмăл машина хăвăртах кирлĕ çĕре çитерет ăна. Хальхинче Çĕньял тăрăхĕнчи Чăрăшкассине 7 сехет иртсенех çитрĕмĕр. «Ир тăракан çерçи тутă пулать», – хăпартлантарать вăл мана.

Ку ял, ыттисемпе танлаштарсан, чылай пĕчĕкрех. 90-мĕш çулсенче 37 кил кăна пулнă, халĕ – 60-а яхăн çурт. Хăшĕсем хăйсен лаптăкĕпе дача вырăнне усă кураççĕ. Малтан халăх «Кадыковский» совхозра ĕçленĕ. Паян çакăнта пĕр организаци те çук. Çамрăксем Кÿкеçре, Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта ĕç вырăнĕсем тупнă.

Тахçан Чăрăшкасси çыннисем хирте хурăнсем патĕнче çурт çавăрнă теççĕ. Унтан вăйлă çил хăваласа янă вĕсене. Халăх Кăкшăм шывĕ патĕнче, лапам хÿттинче хăтлăх тупнă. Халĕ Кăкшăм урамне çырма икĕ енелле пайлать. Унта вată йăмрасем кашласа лараççĕ. Çырмара пĕрисем мунча хăпартнă, теприсем вутă купаламалли вырăн тунă. Çакăнтах çăл пур. Ăна ăшă тумтирпех витсе хунă. Çывăхри çырма хĕрринче те чăрăшсем курăнаççĕ.

Çĕнĕ урам капмар çуртсемпе илемленсех пырать. Чылайăшĕн килĕнче çăмăл машина пур.

Çак ялти Галина Илларионова ывăл шыраса 4 ача çуратнă. Чи кĕçĕнни Павел 10 уйăхра кăна-ха, апла пулин те килте хăйне патша пекех туять. Аленăпа Инна ашшĕ-амăшĕн çунатти айĕнчен вĕçсе тухнă ĕнтĕ. Татьяна кĕçех шкул çулне такăрлатма пуçлĕ. «Кунта çырма тарăнран аслисене алăран çавăтсах çÿреттĕмĕр. Ачасене хамăр машинăпа Шупашкарти шкула леçеттĕмĕр», – каласа кăтартать амăшĕ.

Чăрăшкассисем çитес çур çул валли «Чăваш хĕрарăмĕ» çырăнманччĕ. Мĕн çăмăлпа çÿренине пĕлсен вĕсем те акцие хаваспах хутшăнчĕç. Сиверен хăраманскерсем почтальона тĕл пулма хапха патне кĕпе вĕççĕн чупа-чупа тухрĕç.

Çĕньялти вăтам шкулта кĕçĕн классене вĕрентекен Татьяна Пчелкинăпа Чăрăшкассинче тĕл пулаймарăмăр. Паллă ĕнтĕ, унăн килте пире кĕтсе ларма вăхăт çук. Вăл та хăйсен ялĕсенчен юлас темерĕ. Сăмах май, Пчелкинсем ĕлĕкренпех пыл хурчĕ тытаççĕ.

Çапах хаçат çырăнас тĕлĕшпе пĕчĕк ялта тĕпленнисен пысăккинче пурăнакансене хăваласа çитме çăмăлах мар. Çакна шута илсе Чăрăшкассисене Çĕньялсем пулăшма шухăш тытрĕç. «Пĕтĕмлетÿпе хаçатра паллаштарăр, питĕ кĕтетпĕр», – хушса ячĕç çĕнĕ юлташсем.

«Пепке» ача сачĕн ĕçченĕ Людмила Андреева, сăмахран, Чăрăшкассинче çуралнă, Çĕньяла качча тухнă. «Килĕшекен кашни хаçата пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччен вулатăп. Пĕр статйине те сиктерсе хăварас килмест», – чунне уçать хĕрарăм.

Пĕтĕмлетни: Шупашкар районĕнчи Чăрăшкассисем хăватлă, мал ĕмĕтлĕ пулнине çирĕплетсе пачĕç. Висĕ ялта та 15-шер «Чăваш хĕрарăмĕ» çырăнчĕç. Çапла майпа пурте мала тухрĕç. Кашнине уйрăммăн саламлатпăр! Сирĕн вітĕмпе хаçат тиражĕ 45 экземпляр ÿсрĕ. Халĕ эпир тата вăйлăрах!

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăнÿкерчĕкĕсем.



ЭЛЬВИРА ТАЛАНЦЕВĂПА ОЛЬГА АЛЕКСЕЕВА.





ИЛЛАРИОНОВСЕМ.

Çулсем малалла шăваççĕ çеç мар, сиккипех ăмăртмалла чупаççĕ. Сывлăх пур чухне сисместĕн те çакна. 1997 çулхи кăрлачра «Чăваш хĕрарăмĕ» тухма пуçланине паянхи пекех ас тăватăп. Манăн атте, çичĕ çул салтакра пулнă, хĕрĕх çул ытла водительте ĕçленĕ Леонид Ефимов çырăнса илетчĕ ăна. Мĕнпур номерне типтерлĕн çĕлесе пыратчĕ. Кашни статьяна пĕр йĕрке хăвармасăр вуласа тухатчĕ. Мана та вара: «Ывăлăм, çакăнта кăсăкли тем чухлех. Журналистсем пултаруллă, чĕлхе пуянлăхĕ иксĕлми вĕсен. Вăт çавсенчен тĕслĕх илмелле санăн», – тетчĕ.

Атте пехилне çĕре ÿкермерĕм. Вăл çĕре кĕрсен хаçат

## Хаçат урлă тус тупрăм

вулас эстафета мана куçрĕ. Чуна çывăх кăларăма алăран яма-и? Хам та калеме çивĕчлетсех тăратăп.

Хаçат урлă чылай авторпа паллашрăм, алă тытрăм, туслашрăм. Çав йышра Анатолий Максимов та пур. Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнчи Пукашри Лисаппа Тулине вулакансем лайăх пĕлеççĕ. Унăн пĕр ĕçне те сиктерсе хăвармастăп. Кашни хайлав, корреспонденци, кулăш хăйне майлă сăн-сăпатна илĕртет, хăй патне туртать. Çăмăллăн, курăмлă вуланаççĕ вĕсем. Автор пултарулăхĕпе, тавракурăмĕпе, çырас ăсталăхĕпе тыткăнлать. Вăл такмакçă та... Эх, хуткупăс тăсса яр та ташă картине тух. Хоп-па!

Кăçалхи юпа уйăхĕнче çывăх тусăм çичĕ теçетке тултарчĕ. Сахал мар ку.

Пурнăç урапи çаврăнать. Çитес çул утă уйăхĕнче хам та 70-е çитетĕп. Хавшас мар-ха. Пурăнасчĕ, пурăнасчĕ тетĕп!

**Георгий ТУСЛИ.**



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Купăста кукăлĕ



**200 грамм çăнăх, 150 миллилитр турăх, 100 миллилитр майонез, 3 çăмарта, 0,5 чей кашăкĕ апат соди, 0,5 килограмм купăста, 1 кишĕр кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă купăстана теркăланă кишĕрпе çурма пиçиччен ăшаламалла. Çăмартана турăхпа, майонезпа, тăварпа, апат содипе, çăнăхпа пăтратмалла. Шĕвĕ чустан çур пайне çатмана ямалла. Ун çине ăшаланă купăста хумалла. Çиелтен юлашки чустапа витмелле. Купăста кукăльне духовкăра ылтăн тĕс çапиччен пĕçермелле.

### Тăпăрч кексĕ

**200 грамм тăпăрч, 2 апат кашăкĕ хăйма, 2 çăмарта, 2 апат кашăкĕ услам çу, 1 стакан çăнăх, 0,5 стакан сахăр, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, тăвар кирлĕ.**

Тăпăрча çăмартапа, хăймапа, услам çупа, çăнăхпа, сахăрпа, апат содипе, тăварпа пăтратмалла. Çак хутăша формăна тултармалла. Тăпăрч кексне 20-30 минутлăха духовкăна лартмалла.

### Шпрот салачĕ

**1 банка шпрот, 4 çĕрулми, 3 çăмарта, 100 грамм сыр, пуçлă 1 сухан, майонез. укроп, гранат вăрри, укроп кирлĕ.**

Пĕçернĕ çĕрулмипе çăмартана теркăламалла. Пулла вилкăпа вĕтетмелле. Сухана вĕттĕн турамалла. Салата сийлесе /çĕрулми – шпрот – сухан – майонез – çăмарта – майонез – сыр/ хăпартмалла. Сĕтел çине лартиччен гранат вăррипе, укроппа илемлетмелле.

### Какай торчĕ

**1 килограмм чăх фаршĕ, 1 çăмарта, 100 миллилитр шĕвĕ хăйма, тăвар, авăртнă пăрăç, 100 грамм шăратнă сыр, 5 апат кашăкĕ майонез, шăнтнă 300 грамм кăмпа, пуçлă 2 сухан, 3 шăл ыхра, тип çу, укроппа петрушка кирлĕ.**

Чăх фаршне çăмартапа, шĕвĕ хăймапа пăтратмалла, тăвар, пăрăç сапмалла. Çак хутăша 3 пая уйăрмалла. Пĕр пайне çатмана сарса 15 минутлăха духовкăна лартмалла. Ыттисене те çавнашкалах пĕçермелле.

Суханпа кăмпана тип çупа ăшаламалла. Ыхрана, укроппа петрушкăна, сыра, майонеза блендерпа пăтратмалла.

Какай пашалăвĕсен хушшине симĕс крем сĕрмелле, кăмпапа сухан хутăшĕ хумалла. Торта 1 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

### Печени

**400 грамм çăнăх, 10 грамм кăпăшлантаракан хутăш, ванилин, 200 грамм услам çу, 4 апат кашăкĕ хăйма, 3 апат кашăкĕ сахăр, 1 çăмарта сарри кирлĕ.**

**Çиеле сĕрме 1 çăмарта шурри, арахис, сахăр хатĕрлемелле.**

Теркăланă услам çăва çăнăхпа пăтратмалла, кăпăшлантаракан хутăш, сахăр, ванилин, хăйма, çăмарта сарри ярса чуста çăрмалла. Ăна 2 сехетлĕхе сивĕтмĕше хумалла. Унтан 0,5 сантиметр хулăнăш йĕтĕрлемелле, стаканпа çаврашкасем касса кăлармалла. Ăшаланă арахиса вĕтетмелле. Печение çу сĕрнĕ çатмана хумалла. Çиелтен çăмарта шурри сĕрмелле, арахис, сахăр сапмалла. Печение духовкăра 10-15 минут пĕçермелле.

### Панулмипе, çăмартапа

**2-3 çăмарта, 1 симĕс панулми, 1 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ, майонез кирлĕ.**

**Илемлетме пĕçернĕ 1 çăмарта сарри хатĕрлемелле.**

Пĕçернĕ çăмартана, панулмие теркăламалла. Тĕсне ан улăштартăр тесе панулмие лимон сĕткенĕпе сирпĕтмелле. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла. Çиелтен вĕтетнĕ çăмарта сарри сапмалла.

### Какай çаврашки

**1 килограмм какай фаршĕ, 3 çăмарта, пуçлă 1 сухан, 1 кишĕр, путенен пĕçернĕ 15 çăмарти, сийлĕ чуста, 0,5 батон, 200 миллилитр сĕт, тип çу, петрушкăпа укроп, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Кишĕре теркăламалла. Сухана тăваткалласа турамалла. Петрушкăпа укропа вĕтетмелле. Суханпа кишĕре тип çупа ăшаламалла. Батона сĕтпе йĕпетсе сăрхăнтармалла. Фарша çăмартапа, кишĕрпе, суханпа, батонпа, петрушкăпа, укроппа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Çак хутăша çатмана çаврашка майлă хумалла. Шала путене çăмартисене пытармалла. Какай çаврашкине 40 минутлăха духовкăна лартмалла. Пиçиччен 15 минут маларах ăна чустаран касса кăларнă хăюпа илемлетмелле.

## СЫВЛĂХ

# Ӳслĕкрен пулăшакан курăксем

**Сывлăш çулĕсен тĕрлĕ чирне сиплеме курăксемпе те анлă усă кураççĕ. Анчах кунашкал сиплĕ шыва хутăшăн пĕр-пĕр компоненчĕ тĕлĕшпе аллерги пур чухне ĕçме юрамасть. Çавăн пекех типĕ ӳслĕке Либексин, Синекод, Стоптусин, Коделак йышши эмелпе сипленĕ чухне те курăкпа усă курмалла мар – вĕсем хирĕçле витĕмлĕ.**

**1-мĕш хутăша** сысна курăкĕ /алтей/, матрӳшке /душица/, ама хупахĕн çулçи кĕрет.

Ама хупахĕпе сысна курăкĕ тăртаннине ирттерессĕ, çăра сурчăка тухма пулăшаççĕ. Матрӳшке ӳслĕке çăмăллататъ кăна мар, ăнлантарать те. Çавăнпах 1-мĕш хутăша шăнсан, грипп, çавăн пекех сывлăш çулĕсен инфекципе вирус чирĕсем: пневмони, бронхит, трахеит – çаклансан ĕçеççĕ.

Анчах вăл ача кĕтекенсене юрмасть, мĕншĕн тесен матрӳшкене пула амалăхран юн кайма пултарать.

1 апат кашăкĕ хутăша 1 стакан сивĕ шыва ямалла, шыв мунчинче 15 минут вĕретмелле. 45 минут лартнă хыççăн сăрăхтармалла та вĕренĕ шыв хушса 200 миллилитр çитермелле. Апат хыççăн кунне 2-3 хутчен 100-шер грамм ĕçмелле. Ачасем валли хатĕрленĕ чухне курăка 2 хут сахалрах илмелле. Сиплев курсĕ – 2-3 эрне.

**2-мĕш хутăша** ама хупахĕн çулçи, шăнăр курăкĕ, тутлă тымар /солодка/ кĕрет.

Пĕтĕмĕшле вĕсем çăра сурчăка тухма пулăшаççĕ. Шăнăр курăкĕнче полисахаридсем, каротин, гликозид, С витамин пур. Ама хупахĕ инулинпа, эфир çăвĕсемпе пуян. Пылак тымарта вара ытти паха япалапа пĕрлех глицирризин йӳçĕкĕ пур. Ку хутăша сывлăш çулĕсенчен çăра сурчăк япăх тухакан чирсемпе аптрасан, пневмониреn, бронхитран, трахеитран, гриппран, шăнса пăсăлсан сиплеме ĕçеççĕ. Паллах, аллергиксен асăрханмалла. Амăшĕ пулма хатĕрленекенсен – пушшех те. Вĕсемшĕн пылак тымар сиенлĕ.

Ку хутăша 1-мĕшĕ пекех хатĕрлемелле. Ăна сивĕтмĕшре 2 кунран ытла упрама юраманнине асра тытмалла.

**3-мĕш хутăша** шалфей, анис çимĕçĕ, хыр кăчки, алтей тымарĕ кĕрет.

Вăл та сывлăш çулĕсем шыççăннине ирттерме, çăра сурчăка тасатма пулăшать. Хыр кăчки дезинфекци витĕмĕллĕ, тăртаннине те ирттерет. Анис та çаплах. Шалфей вара шыççăннине ăнлантарать. Алтей хĕрелнине ăнлантарнисĕр пуçне çăра сурчăка тухма пулăшать. Çавăнпах ку хутăш шăнса пăсăлсан, грипп ерсен, сывлăш çулĕсен инфекци чирĕсенчен: пневмониреn, бронхитран, трахеитран – сиплеме пулăшать. Унра ача кĕтекен хĕрарăмшăн хăрушлăх кăларса тăратакан анис курăкĕ пур. Аллергиллĕ çынсен те асăрханулăх çиччен манмалла мар.

Сиплĕ шыв хатĕрлеме 2 апат кашăкĕ хутăша 1 стакан вĕри шыва ярса 15 минут вĕретмелле, 45 минут лартмалла. Сăрăхтарсан 200 миллилитра çитериччен вĕренĕ шыв хушмалла. Кунне 3-4 хутчен 100-шер грамм ăшăлла ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 14-21 кун.

**4-мĕш хутăша** ухмах йывăççи /багульник/, салтак тӳми, аслати курăкĕ /фиалка/, пĕтнĕк, календула, тутлă тымар кĕрет.

Чи малтанах кунашкал чей туртса лартнă тĕртĕмсене ăнлантарать, çăра сурчăка тухма пулăшать, шыççăннине те ирттерет. Ухмах курăкĕнче эфир тĕрлĕ çăвĕсем пур, вĕсем çăра сурчăкран хăпма пулăшаççĕ. Салтак тӳми хĕрелнине, тăртаннине сиплет. Календулăра тĕрлĕ йӳçекпе паха япала нумай. Аслати курăкĕ С витаминпа пуян, унри ытти паха япала ăнлантарать те. Пылак тымар та усăллă. Пĕтнĕкри эфир çăвĕнче ментол пур. Ку хутăшран хатĕрленĕ шыва астма аптратсан, сывлăш çулĕсем тĕрлĕ инфекципе вируса пула шыççăнсан ĕçеççĕ.

Чылайăшĕ ача кĕтекен хĕрарăмшăн шăпах 4-мĕш хутăш аван тесе палăртать. Анчах унта тутлă тымар пуррине асра тытмалла. Вăл вара гормонсен тытăмне витĕм кӳрет.

Ку хутăша та 3-мĕшĕ пекех хатĕрлемелле. Сиплĕ шыва кунне 3-4 хутчен 70-шер грамм ĕçмелле. Ухмах курăкĕ наркăмăшлисен йышне кĕнине те манмалла мар.

*Сипленме пуçличчен малтан тухтăрпа канашламалла.*

## КАЙĂК-КĔШĔК

# Кăрккана пилеш çитермелле

Витери 15 градус сивве кăркка çăмăллăнах чăтса ирттерет. Витĕр çил вĕрнине тата нӳрĕке пула ăна чир ерме пултарать.

Ури ан шăнтăр тесен урайне улăм, пăчкă кĕрпи е торф сарса памалла. Улăма – 10 кунран, пăчкă кĕрпипе торфа виçĕ эрнерен улăштарса тăмалла.

Витере чӳрече пур тăк – хушма çутă çутмасан та юрать. Çитĕнсе çитнĕ амапа аçана вара талăкне 14 сехет çутă кирлĕ. Урамра хĕвеллĕ пулсан, электроэнергие перекетлес тĕллевпе, кайăк-кĕшĕке картише кăлармалла.

Сивĕре кăрккана кунне виçĕ хутчен апатлантармалла. Ăна урпа, тулă, куккурус ытларах çитермелле. Кайăк-кĕшĕкĕн рационне теркăланă кишĕрпе кăшман, шӳтернĕ люцерна кĕртмелле. Кăнтăрла вĕтетнĕ каштанпа йĕкел пама юрать.

Ӳсен-тăранри витамин çинчен те манмалла мар. Хĕлле симĕс курăк тупаймăн, апла пулин те вăрман пуянлăхĕпе усă курма пулать. Тĕслĕхрен, чăрăш, хыр тураттисем татса килмелле. Унта каротинпа С витамин пур. Лăсăллă йывăç йĕпписене вĕтетсе апатпа пăтратмалла.

Пилеш те кăрккан сывлăхне çирĕплетет. Пĕр кайăка талăкне 10 çырла çитерни çителĕклĕ. Типĕтнĕ вĕлтĕренпе хурăн çулçине те юратсах сăхать вăл. Сăмахран, картишĕнче усăпа çӳрекен кайăккĕшĕк валли милĕк çакса пама пулать. Çавнашкалах апата пĕр кайăк пуçне 2 грамм пулă çăвĕ хушмалла. Вăл организма Д витаминпа тивĕçтерĕ.

Хĕлле, витере тăнă чухне, кăркан тĕкĕнче паразит йăва çавăрма пултарать. Çавăнпах профилактика тĕлĕшĕпе хăйăр, кĕл лартса памалла.

Витери кăркка хăвăртах мăнтăрланать, çавăнпах кайăк-кĕшĕке лăпкă çанталăкра 2 сехетлĕхе усă сывлăша кăлармалла. Картишĕнчи юра тасатма ӳркенмелле мар.

## ЫЙТУ-ХУРАВ

# Упăшка ачасăр хăварасшăн

**Упăшка мана çул çитмен ача тĕлĕшпе ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарас тĕллевпе ыйту сырнă. Кун пек ĕçсенче мĕнле сăлтава тĕпе хураççĕ-ши?**

**С.Г.**
Шупашкар хули.

РФ Çемье кодексĕн 61-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн, ашшĕпе амăшĕ ачисен тĕлĕшпе пĕр пек правллă. Вĕсене суд ашшĕ-амăшĕн правинчен асăннă кодексăн 69-мĕш статйинче палăртнă сăлтавсене пула /енчен те пĕри чăннипех те айăпа кĕнĕ тĕк/ хăтарма пултарать.

«Аслисенчен пĕри хăйĕн тивĕçне пурнăçламанни» тени вăл çак йĕркене пĕрре мар, тăтăшах пăснине пĕлтерет. Кунта аслисенчен пĕри ывăл-хĕрне пачах пăхманнине, ача епле условире пурăннине кăсăкланманнине, воспитани ыйтăвĕсем çинчен маннине шута илмелле.

РФ Аслă сучĕн Пленумĕн 1998 çулхи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн, ашшĕ-амăшне хăйсен правинчен хăтарни чи юлашки мера пулмалла.

Суд айăплин пурнăç йĕркине, хăтланăвĕсене, кăмăл-сипетне, ку е вăл лару-тăрăва шута илсе ăна ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарас ыйтăва тивĕçтермесен те пултарать. Кун пек чухне суд айăплине тӳрленме, ачине воспитани парас тĕлĕшпе ĕçлеме сĕнет. Çак хушу епле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăма опекăпа попечительство органĕсене хушать.

Суд ашшĕ-амăшĕн правинчен хăтарас ыйтăва татса памалли ĕçсене ыйтăва иккĕмĕш ашшĕ-амăшĕ /вăл ачапа пĕрле пурăнмасан та/, ашшĕ-амăшне улăштаракан çын: усрава е опекăна илнĕскерсем, прокуратура, çул çитмен ачасен прависене сыхлакан органсем тăратсан пăхса тухать.

**Л.БУСОВА,**
**Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи.**

## ТĔКĔР УМĔНЧЕ

**Тĕрĕс апатланни организма ырă витĕм кӳрет. Хăш-пĕр çимĕç вара косметологи мелĕнчен те ытларах пулăшать.**

Тăпăрч тутана çемçетет. Унри рибофлавин япаласен ылмашăвне йĕркелет. Тута типет тĕк – куллен 200-шер грамм тăпăрч çимелле.

Соя çӳç тымарĕшĕн усăллă.

Алă кушăрхани рациона банан кĕртмеллине пĕлтерет.

Кăмпари $B_{12}$ витамин ӳтĕн пигмент сийне çирĕплетет.

Шăлан шывĕпе пыл хутăшĕ ыванннине ирттерет, вăй хушать.

Миндаль, аçтăхан мăйăрĕ, персик, хура çырла юратакан çын çамăкрах курăнать.

Типĕ, кушăрхакан ӳтлисен пулă ытларах çимелле.

Куллен йӳçĕтнĕ купăста, манго, киви, хура хурлăхан, апельсин, лимон çисен ӳт пĕркеленмĕ.

Сĕт, йогурт, сыр кăмăллаканăн питне вĕтĕ шатра тухмĕ.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Кĕçĕн ывăл – хулара

Лидия Максимовна шкулта ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухрĕ. Вĕренекенĕсем манмаççĕ, кашни уявпах саламлаççĕ ăна. Хăйĕн ачисем тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнче тĕпленчĕç, тăван тăрăха тăтăш килеймеççĕ. Чăвашсен йăлипе кĕçĕн ывăлне тĕп килте хăварасшăнччĕ амăшĕ. Вăл та пулин хулана тухса кайрĕ. Те ытла ачаш ÿстĕннĕрен хăйне валли професси суйласа илеймерĕ Алеша.

Яла килсен те ашшĕ-амăшне пулăшас вырăнне пĕтĕм вăхăта юлташĕсемпе ирттерет çамрăк. Çапах Лидия Максимовна ывăлĕшĕн укçа-тенкĕ шеллемест. Нумаях пулмасть вĕр-çĕнĕ автомашина илсе пачĕç ăна. Ашшĕ çав укçапа мунча хăпартасшăнччĕ, хуралтăсене йĕркене кĕртесшĕнччĕ, анчах хĕрарăм сăмахĕнчен иртмерĕ. «Ывăла пулăшмалла пирĕн. Çук çын ачи мар вĕт вăл», – пĕр вĕçĕм çапла калать Лидия Максимовна.

Шупашкарта Алешăна ăнăçрĕ тесен те юрать. Вăл ĕçчен те чипер хĕрпе паллашрĕ. Малтанлăха иккĕшĕ çын хваттерĕнче пурăнчĕç. Киле çĕрле таврăннине те, машинăпа юттисене ярăнтарнине те каçарчĕ Алина. Кашни каçах савнийĕ валли тутлă апат хатĕрлерĕ, унпа ăшшăн калаçрĕ хĕр. Çие юлнине пĕлсен мĕнешкел хĕпĕртерĕ пулас амăшĕ. Алеша вара савăннине кăтартмарĕ. Çитменнине тата авланма шантарнăскер туй кунне палăртма васкамарĕ. Алинăн сывăх çыннисем çине тăнипе кăна ача çураличчен çемье çавăрчĕç вĕсем.

Алеша ăса кĕмерĕ. Çемье пĕлтерĕшне ăнланманскер арăмне те, тĕпренчĕкне те юратма пĕлмерĕ. Малтанхи пекех таçта çухалса çÿрерĕ вăл. Пысăк шалуллă ĕç шырарĕ. Вăл е ку организацире сахал тÿленĕшĕн ÿпкелешрĕ.

Ывăлĕ çемье çавăрнăранпа Лидия Максимовна кинĕпе мăнукĕ валли укçа пуçтарма пуçларĕ. Çавăнпах укçа-тенкĕрен татăк пулнăмасть çамрăк арăм. Пĕрре хăнана килсен хăйсене ятăн хваттер илесси пирки сăмах пуçарчĕ хунямăшĕ. Ун чухне Алина ĕçе тухнăччĕ ĕнтĕ. Чăнах, хваттер тара илнĕшĕн мĕншĕн çынна укçа памалла? Йÿнĕрех хакпа икĕ пÿлĕмлĕ хваттер пăхса хучĕç вĕсем. Алина кредит илчĕ. Çамрăк арăмăн тахçанхи ĕмĕчĕ тинех пурнăçланчĕ.

Алеша тăван киле каясшăнах мар. Алинăпа ывăлĕ вара кашни эрнерех çула тухаççĕ. Пĕчĕк Олег аслашшĕпе асламăшĕ хăйне хытă юратнине туять. Алина кил таврашĕнче, пахчара ĕçлесе пулăшасшăн. «Пирĕн кин ир пуçласа каçчен салат тăвать, компот хупать, хăяр-помидор маринадлать. Курăр-ха, йăлтах ретĕн-ретĕн лартса тухнă», – кÿршисене чĕнсе каçать те нÿхреп алăкне яри! уçса пăрахать Лидия Максимовна.

«Çак кĕпене кин илсе пачĕ. Ман валлиех çĕленĕ тейĕн. Ăçтан тупса илнĕ-ши?» – урамра сарканать хĕрарăм. Кинĕ вырăн таврашĕ парнеленине те ялĕпех пĕлеççĕ.

Алина иккĕмĕш хут анне пулма хатĕрленни çинчен хальхинче упăшкине мар, хунямăшне каларĕ. Чылайччен сăмах ваклареç хĕрарăмсем. «Кин, тăван хĕр пекех эсĕ пирĕншĕн. Çурат. Ачасене пĕрле пăхăпăр», – телефонпа калаçнă чухне те хунямăшĕн пичĕ йăл кулăпа çиçнине туять хĕрĕх чĕрнеллĕскер. Çакă малалла пурăнма вăй-хăват хушать ăна.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ЧУНРИ

# Упăшкана юттине памастăп

Тивĕçлĕ канăва тухсан хуларан яла куçасси пирки упăшкапа иксĕмĕр çамрăк чухнех ĕмĕтленнĕ. Кăçал ялта çурт лартрăмăр. Ачасемпе мăнуксем те пулăшрĕç. Сăмах май, ывăлпа хĕрĕм тахçанах çемьеллĕ, уйрăм пурăнаççĕ. Çĕнĕ çĕрте пахчаçимĕç ăнса пулчĕ. Чăх-чĕп хĕлĕпех çăмарта тăвать.

Упăшка манран та кĕçĕнрех. Вăл тепĕр 6 çултан тин пенси укçи илме пуçлать. Эпĕ вара кăçалах ĕç пăрахрăм. Тивĕçлĕ канура хулара мĕн туса пурăнмалла? Ялта хĕрарăмсен хорне, ал ăстисен кружокне çырăнтăм. Килте телевизор пăхнă вăхăтра та çыхатăп, тĕрлетĕп. Упăшка канмалли кунсенче мана курма килет. Çапах пысăк пÿртре унсăр кичем. Ялта ун валли ĕç шыраса пăхрăм – кăлăхах.

Вăл вара тунсăхлани пирки каламасть. Кăçсерен мĕн ĕçлет-ши? Юлашки вăхăтра мана çак ыйту канăç памасть.

Эпĕ чăвашла пур спектакле те çитсе курма тăрăшатăп. Хальхинче те премьерăна кайма билет туянтăм. Юлашки рейспа Шупашкара вĕçтерсе çитрĕм. Кун пирки упăшкана систермен. Спектакль хыççăн хваттере çул тытрăм. Кухньăра çутă пур – апла тăк мăшăр килте. Шăпах хырăм выçнăччĕ манăн.

Хваттере чиперех кĕтĕм. Кухньăри çутăпах упăшка килте труççи вĕççĕн çÿренине куртăм. Палламан хĕрарăм манăн халата уртса янă. Ахăртнех, хăйне килти пекех туять. Мана курсан иккĕшĕн те чĕлхи çĕтрĕ. Эпĕ те ним калама пĕлместĕп. Те хамăн тухса каймалла, те ют хĕрарăма хăваласа ямалла? Юрать-ха эпĕ тăна кĕриччен ялписене хĕстерсе тухса тарчĕ хайхискер. Упăшкапа иксĕмĕр кăна юлтăмăр. Ара, арçынна ним мар туртса илеççĕ вĕт! Çăвара карса тăрса юлмалла-и манăн? Чун çунса тухасла ыратсан та пĕрреллĕхе каçартăм ăна.

Халĕ упăшкапа пĕрле выльăх усраса тупăш илетпĕр. Ял пурнăçне иксĕмĕр те хăнăхрăмăр. Пирĕн хресчен фермер хуçалăхĕ таврара ырă ят çĕнсе илчĕ.

**СВЕТЛАНА.**



АХ, АНЧАХ...

# Чун çунтармăш...

Эх, общество транспорчĕ, миçе мăшăра паллаштарман-ши эсĕ? Миçешне уйăрнă-ши тата?!

Пĕтĕмпех йĕркипе каласа кăтартам-ха. Ваçукпа нумай-и сахал-и – икĕ çул туслă. Эпĕ пиллĕкмĕш курсран кăçал вĕренсе тухатăп тăк, вăл диплом илнĕ хыççăн иккĕмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Салтакра пулма та ĕлкĕрнĕ-ха манран виçĕ çул аслăраххскер. Шăпах вăл хĕсметрен таврăнсан паллашрăмăр та.

Эх, еплерех сикрĕ йĕкĕт ташă каçĕнче! Чутах çамкипе маччана шăтарса кăларатчĕ-тĕр. Эпир те хĕрсемпе хушăран дискотекăна çÿреттĕмĕр. Пĕр вырăна хурт кĕнĕ пек йăраланаканскер хăйне чарусăрăн тытрĕ пулин те кăмăлăма кайрĕ. Ытла та чипер-çке вăл. Халĕ те ун çине еплерех ытараймасăр пăхатăп. Мĕн тери кĕвĕçетĕп тата! Кун пек илеме ытти хĕрсем те асăрханине туймастăп-им? Ваçука пĕри-пĕри манран туртса илесрен сехре çук. Анчах çакна савнă туса систерместĕп-ха. Унăн ку хыпара пĕлмесен те юрать. Хăй мана çухатасран хăратăр. Мĕн, эпĕ пăхмалăх çук-им? Кĕлеткем те çинçе, чĕлтĕмелĕх те пур, кукăль пĕсерме те пĕлетĕп.

Хайхи çав каç чиперскер мана хуллен кĕвĕпе çаврăнма чĕнсен мĕн тери савăннăччĕ тата! Эппин, вăл та мана куç хывнă. Чĕре тĕпĕнче шанчăк çуралчĕ. Ара, эпĕ савнисĕр хĕр-çке. Манăн та туссем пек каччăллă пулас килет. Тĕреклĕ те патвар яш ытамĕнче киленсех ташларăм ун чухне. Ятăма та пытармасăрах пĕлтертĕм. Общежити умне леçтерме те хирĕçлемерĕм.

Телее, пурнăçра Ваçук пĕрремĕш хут курнă чухнехи пек чарусăр мар. Салтакран таврăннă ятпа хĕпĕртесе çавнашкал савăннă-тăр ун чухне. Апла пулин те тĕрлĕ уява çÿреме юратать. Ташлама та хирĕç мар вăл, мана та урай варринех пĕрле чĕнсе кăларать. Эх, савăк пурăнатпăр çав! Кичемленме памасть савни. Часчасах кинона илсе тухать, çамрăк кĕлеткен хускалмалла тесе коньки те сыртарать, дискотекăна та çитетпĕр хушăран. Тĕрĕссипе, вăл ташă каçĕсене мансăр та çÿренине шахвăртаттăм-ха. Чухлаттăм. Анчах чун савни çакна нипеле те йышăнмастчĕ. Манпа тĕл пулман каçсенче мĕн тунине ыйтсан «сывăратăп» тетчĕ пĕрмай. Ĕçлекенскерĕн канмалла-мĕн.

Эпĕ вара арçынсене кулăсем яшки йăлăхтарнине пĕлместĕп-им? Çемьеленменнисем мар, авланнисем те чипер хĕрсене куçпа авăрлаççĕ. Хысран пăхса çеç ăсатсан юрĕччĕ-ха, çырлахмаççĕ-çке... Иккĕленмесĕр шанассăм килместчĕ пулин те ĕненеттĕм савнине. «Пĕррехинче» вара...

Троллейбусра пыратăп хăйхи. Ларкăч çине меллĕ кăна вырнаçрăм та зачет пама каяканскер телефонпа усă курса Интернетра вĕреннине аса илсе вулатăп.

– Эй, эсĕ мăнуку çурçĕр иртсе пĕрре-иккĕсĕр те таврăнмасть тетĕн-ха, манăн вара ирчене хĕрет. Вăл киличченех ыйха çухатса выртатăп. «Авланмалла» тетĕп те – яхăнне те ямасть.

– Хамăрăн та çавах. «Не нагулялся» тет те калаçăва пăрать.

– Сирĕн Сашук çамрăк-ха, 21-ре кăна. Пирĕн 25-ре ĕнтĕ. Иттуш авланасси çинчен калаçмасть.

– Тепĕр тесен, савăнса юлчăр-ис. Çамрăк ĕмĕр пĕрре килет вĕт. Арăмне сывăрттарса тухса кайни мар. Авлансан килте ларĕç-ха. Аттук çемьеленсен айккине чупĕç.

– Çапла та. Пирĕн хĕрĕ пур тесе те калаçкалать те... Паллаштармасть-ха. Иртерех тет.

– Мăнуксен ачисене курма сывлăхсем çеç пулччăр ĕнтĕ...

Шел, калаçу малалла епле тăсăлнине итлеймерĕм. Тухма вăхăт çитрĕ. Хам вырăнтан тапрансан мăнукĕсене «кăшлакансене» çаврăнса пăхассăм килчĕ. Ай-тур-тур! Мĕн куратăп! Пĕри ман Ваçукăн кукамăшĕ-иç! Савнийĕм тăванĕсемпе куçа-куçăн паллаштарман пулин те сăнĕсене кăтартнах. Шăп та лăп çав чипер кинемей лара парать!

Ну, паратăп халĕ Ваçука! Ирччен ăçта çÿренине тĕпчесе пĕлетĕпех! Ман патра теейместь – пирĕн общежити каçхи 11 сехетрех алăкне хупать. Ташă каçĕнче те иксĕмĕр ирччен çÿресе курман эпир. Ытти вăхăта кампа сутать эсремет? Авланма та васкамасть иккен-ха. Мана вара пĕр вĕçĕм диплом илмеллине, малтан ĕçе вырнаçмаллине çирĕплетет. Унсăрăн декрет укçи памаççĕ-мĕн. Эх, мур арçынни, чун çунтармăш мар-и-ха? Кăтартăп-ха сана...

**МАРУК.**

**Виктор СИМАКОВ**

# Тивлет

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 46-48 номерсенче/.**

Тепĕр кунне вара Енилепе Шуçăмпи хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ патне иккĕшĕ пĕрле пыма шухăшларĕç. Шуçăмпи маларах кĕчĕ. Ун хыççăн Ениле кĕрсе сывлăх сунчĕ. Пăртак калаçса ларнă хыççăн Ениле тӳрех:

– Яткар пичче, Селиме аппа, эсир мĕн калăр, эпир Шуçăмпипе пĕрлешме калаçса килĕшрĕмĕр. Паллах, эсир хирĕç пулмасан. Сирĕнтен ирĕк ыйтасшăн.

– Эсĕ çакна чăнласах калатăн-и, Ениле? – ыйтрĕ Яткар.

– Чăнласах, Яткар пичче. Эпир чылайранпа пĕр-пĕринпе килĕштерсе çӳретпĕр, пĕр-пĕрне юрататпăр.

Çак вăхăтра Шуçăмпи тепĕр пӳлĕме кĕрсе тăчĕ.

– Çырлана вăхăтра татмалла, – терĕ Шуçăмпи ашшĕ. – Эсĕ начар çын мар-ха.

– Эпĕ нимĕн те калама пултараймастăп. Енчен те эсир пĕр-пĕрне юрататăр пулсан эпĕ те хирĕç мар. Хамăр хĕре килтен те ярас килмест те, мĕн тăвăн, пирĕнтен тухнă йăла мар, вăхăт çитсен кашнин хăйне тивĕçлĕ мăшăр тупмалла. Ыран аçупа аннӳ килччĕр.

– Шуçăмпи, кил-ха кунта, – чĕнчĕ хĕре ашшĕ. – Кала, эсир пĕрлешме пирĕнтен пил ыйтма калаçса килĕшрĕр-и?

– Килĕшрĕмĕр, атте, анне. Эпир пĕрпĕрне юрататпăр. Эсир мĕн калатăр кун пирки?

– Пĕрлешмелле пулсан йăли пултăр. Евчĕ яратăр-и, аçупа аннӳ килччĕр-и? Эпир Селимепе иксĕмĕр те хирĕç мар. Ултавлă ан пултăр кăна.

Тепĕр кун Яткарпа Селиме патне Ениле, унăн ашшĕпе амăшĕ Ятаранпе Эрнепи, Яткар шăллĕ Сантăр килчĕç. Ениле чечекпе килнĕ. Ятаран сĕтел çине çур литр кăларса лартрĕ. Селиме апатçимĕç хатĕрлесе пурне те сĕтел хушшине чĕнчĕ.

– Малтан сĕтел хушшине ларар-ха, – сĕнчĕ Яткар. – Унтан калаçăпăр. Çывăхрах паллашма пĕрер черкке пушатар.

Селимепе Эрнепи эрехе тутисем патне илсе пырса тутанса пăхрĕç те каялла лартрĕç. Сантăр ĕçмерĕ.

Сĕтел хушшинче ларнă хушăра калаçу çыпăçса пычĕ пулас хăтасемпе тăхлачăсен. Енилепе Шуçăмпи пĕрлештерме калаçса килĕшрĕç. Тепĕр эрнерен вĕсен туйне тумалла.

Çапла вара килĕшнĕ хыççăн эрнерен Енилепе Шуçăмпи туйĕ те лайăххах иртрĕ.

* * *

Сентиер пĕрмай авланасси пирки шухăшлать. Пĕрлешнĕ çынпа ĕмĕр пурăнмалла, ачасем çуратса ӳстермелле, вĕсене тĕрĕс воспитани памалла. Çавăн пек шухăша путнă вăхăтра пĕр хĕрарăм пурнăçĕ аса килчĕ. Çулăмпи ятлă вăл. Çавăн пек каланăччĕ вăл: «Иккĕ качча кайса та упăшкапа ăнмарĕ. Ăннă арçын тĕлне пулаймарăм».

Мĕн тăвăн, упăшка лайăх пуласси тепĕр чухне арăмран та килет. Çулăмпи çемьере ачаш ӳсрĕ, чи кĕçĕнни пулнăран ăна ытлашши юратарах панă-тăр. Яшкаçăкăр йĕркеллĕ пĕçерме пĕлмест. Кĕпейĕм таврашне те качча кайиччен çуса курман. Ун пек çынпа ăçтан килĕштерсе пурăнăн-ха? Кашнин ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачине юратать. Юратăвăн та чикки пулмалла. Юратнипе пĕрле ĕçе те вĕрентмелле.

Сентиер Шуçăмпие ытларах юратнă пулин те ун çинчен Ухтепие пĕлнĕ чухлĕ пĕлеймерĕ. Ухтепие ачисем кăна мар, ашшĕ-амăшĕ те юратать. Хĕр килĕнче те ĕçсĕр лармасть. Ыранхи уроксене хатĕрленнисĕр пуçне выльăх-чĕрлĕхе те пăхать. Кил-çурта тирпейлĕ, таса тытать. Пур çĕре те ĕлкĕрет.

Шуçăмпи Енилене качча кайнă хыççăн Сентиер Ухтепипе ытларах тĕл пулма тăрăшрĕ. Ĕлĕкхи пекех юрă-ташă ушкăнĕнче те пĕрле юрлаççĕ, репетицисене пĕрле çӳреççĕ. Сентиер чухлать: Ухтепи ăна юратать. «Ухтепипе пурнăç тума пулать, вăл пур енчен те пултарать, хăть те мĕнле ĕçе те пĕлсе тăвать, ӳркенмест», – шухăшлать Сентиер.

Авланиччен те, качча кайиччен те нумай шухăшлатăн. Мĕнле çын лекет? Кампа пĕрле çемье çавăрма тӳр килет? Кăмăлĕ мĕнле? Мĕн каласан та çемье тыткăчи – хĕрарăм. Çемье йĕркелĕхĕ унран та килет. Паллах, арçынсенчен те килмест мар. Кунта пĕр-пĕринпе килĕштерни кирлĕ.

Пĕрре экскурси вăхăтĕнче çак юрра юрласа панăччĕ:

Манас çук пирвайхи юратăва,
Манас çук пирвайхи каçсене.
Пирвайхи юрату аса килсен
Ик куçăмран куççуль тăкăнать.

Çавăн хыççăн пĕр хĕрарăм: «Иккĕмĕш хут качча кайсан та пирвайхи юрату манăçăнмасть», – терĕ. Нумайăшĕ унпа килĕшрĕ. Пĕри вара çавăн пек каласа хучĕ: «Чăн-чăн юрату çук-тăр вăл. Пĕр çынна килĕштеретĕн те, пĕр-пĕрне лайăх хăнăхса çитетĕн те, лайăх пурăнатăн», – терĕ. «Хăв юратнине каяймасан çавăн пек те пулать», – терĕ тепри. Тĕрĕссипе, пĕр-пĕрне юратса çӳренĕ вăхăтра савнин лайăх енĕ те, тӳнтер енĕ те пит туйăнсах каймасть. Пĕрле пурăнсан вара çыннăн пичĕ те, тӳнтерĕ те яр уççăн тухса тăрать. Пурăнма тытăнсан пĕр-пĕрне итлесе, каçарма пултарни кирлĕ. Тĕрĕссипе, килĕштерсе пурăнни, пĕр-пĕрне итлени çемьене çирĕп тытать.

* * *

Çавăн пек темиçе кун шухăшласа çӳренĕ хыççăн Сентиер Ухтепи патне пычĕ те:

– Каçар ĕнтĕ, Ухтепи, эпĕ Шуçăмпие ытларах юрататăп тесен сана хамран писме ыйтнăччĕ. Эпĕ нумай шухăшларăм сан çинчен. Эпир пĕр-пĕринчен нихăçан та сивĕнмен, сивĕнместпĕр те. Санăн хитре сăну та, ĕçе юратни те çителĕклĕ. Эсĕ лайăх арăм пулатăн. Сăнатăп та, сан çине каччăсем те ăшшăн пăхаççĕ. Эсĕ вĕсемпе çӳрес маррине те туятăп. Эпĕ хам та сана никама та парас çук. Пирĕн иксĕмĕрĕн пĕрлешмелле кăна.

– Сентиер, эпĕ сана юратнине пĕлетĕн-çке. Ун пирки сана пĕрре мар каланă. Мана качча илес тесен эпĕ санăн арăму пулма килĕшетĕп.

Кун хыççăн Сентиер ашшĕпе амăшĕ Ухтеписем патне килчĕç. Сентиер хĕр валли чечек илчĕ.

Ука сĕтел çине хатĕрлерĕ.

– Калаçма çăмăл пултăр, черкке ӳпĕнтерер-ха, – терĕ Алякка. Хĕрарăмсем тутисене кăна тивертрĕç.

– Пирĕн каччă пур, сирĕн – чипертен те чипер хĕр. Ваттисен йăлипе иккĕшне пĕрлештерес терĕмĕр. Мĕн калатăр кун пирки, – пуçларĕ Уняслу.

– Мĕнле калас, ĕмĕрĕпех ашшĕпе амăшĕ патĕнче ларас çук. Хĕрĕмĕр килте те пит пулăшатчĕ те, мĕн тăвăн, пирĕнтен тухнă йăла мар. Иккĕшĕ пĕр-пĕрне юратсан эпир хĕрĕн кăмăлне хăварас теместпĕр. Иккĕшĕ килĕштерччĕр кăна.

Çапла туй кунне, çĕнĕ хăна тăвасси пирки те калаçса килĕшрĕç.

Туй кунĕнче Сентиер ашшĕпе амăшĕ патне тăванĕсем пухăнчĕç. Туй пуçĕ юрă пуçларĕ:

Чĕрик те марик темесессĕн
Кĕлте ураписем, ай, хускалмĕç.
Атьăрах та атьăрах темесессĕн
Пирĕн туй халăхĕсем, ай, хускалмĕç.
Атьăрах та каяр та, ай, вăрмана
Юманĕнчен хуйăрне, ай, уйăрма.
Атьăрах та каяр та хăта патне
Амăшĕнчен хĕрне те, ай, уйăрма.

Туй пуçĕ çумне ыттисем хутшăнчĕç. Кăштах юрланă хыççăн хĕр илме тухса кайрĕç.

Хĕре илсе таврăннă хыççăн икĕ енчен те пĕрле каччă килĕнче туя малалла тăсаççĕ.

Çапла Сентиерпе Ухтепи пурнăçĕ аванах майлашăнса кайрĕ.

* * *

– Ну, Сентиер, Шуçăмпи сана юратман та, юратмасть те, куртăн-и, унăн хăйĕн каччи пулнă. Вăл Енилепе пĕрлешрĕ. Эсĕ вара тăрса юлтăн. Пĕр енлĕ юрату нихăçан та телей кӳмен. Чĕрене çунтарни кăна.

– Тĕрĕс калатăн, Ухтепи. Эпĕ санпа килĕшетĕп.

Пĕрлешнĕ хыççăн та Сентиерпе Ухтепи клуба тухма пăрахмарĕç-ха. Иккĕшĕ пĕрлех ташлаççĕ. Юрă-ташă, спектакль репетицийĕсене те пĕрле çӳреççĕ.

– Халĕ эпир арлă-арăмлă çынсем. Эсĕ те, Ухтепи, Шуçăмпирен кая мар. Хитрелĕхе те, ĕçченлĕхе те çут çанталăк сана тивĕçлипех панă.

– Ĕçе юратма вĕренесси аттепе аннерен те нумай килет, – терĕ Ухтепи Сентиер çине пăхса. – Эсĕ урăххине куç хывма тытăнмасан лайăххах пурăнăпăр-ха.

– Ухтепи, сансăр пуçне мана никам та кирлĕ мар. Эпĕ сана унччен те юратман мар. Пĕрлешиччен те иксĕмĕр лайăххах çӳрерĕмĕр.

– Эсĕ Шуçăмпие ытларах юрататăп тенĕччĕ.

– Эпĕ ун пек каласа хама кăна ухмаха кăлартăм. Унпа çыхланмалла та пулман манăн.

– Эпĕ сана хамăн туйăмсем пирки тахçанах каланă. Эсĕ манпа та лайăх пулма тăрăшрăн.

– Эпĕ сана тиркемен вĕт-ха, Ухтепи. Сан патна манăн тахçанах ырă туйăмсем пурччĕ. Атя-ха ун çинчен урăх калаçар мар. Манар вăл темăна. Пĕр-пĕрне юратни кăна мар, ĕçе пĕлни те кирлĕ. Арçын хăйĕн ĕçне пĕлтĕр кил-çуртра, хĕрарăм – хăйĕнне. Ав Эрнепи хăй юратнине качча тухрĕ те ĕне сума та пĕлмест, упăшки сăвать. Урай çума та упăшкине хушать. Яшка-çăкăр та йĕркеллĕ пĕçерме пĕлмест. Çавна пула та йытăпа кушак пек харкашаççĕ. Пурнăç-и вăл? Ачасем çуратса пĕрле ӳстерни те çемьене тĕрек парать. Кашни хĕр – пулас анне. Ман шухăшпа, качча кайса юрăхлă пулма малтанах хатĕрленмелле.

– Тĕрĕс калатăн эсĕ, Сентиер. Пурнăç пĕрре килет. Ăна темĕнле ирттерсе яма та пулать. Никам та пĕччен юласшăн мар.

Сентиерпе Ухтепи чылайччен калаçса ларчĕç.

– Эпир санпа иксĕмĕр кăна пĕр-пĕрне тивĕçлĕ мăшăр пулма пултаратпăр, – терĕ Сентиер Ухтепие.

Сентиер выртсан та нумайччен çывăраймарĕ çак калаçу хыççăн. Ачалăхри юлташĕн пурнăçне аса илчĕ. Ача чухне вăл Мăрсукпа туслăччĕ. Пĕр класрах вĕренетчĕç. Ӳссе çитĕнсен те татăлмарĕ çыхăну. Мăрсук авланчĕ те вĕсен юлташлăхĕ те пĕтме тытăнчĕ. Юлташĕн арăмĕ Туйпи упăшкине ним çук çĕртен вăрçма юратать. Упăшкин пĕлмен ĕçĕ çук. Вĕсен патне пыма та юрасах каймасть. Пĕрре çапла Сентиерпе Мăрсук çар комиссариатне кайрĕç. Вĕсем иккĕшĕ те – саппасри офицерсем. Килнĕ чухне Мăрсук лавккара çур литр эрех илчĕ.

– Эсĕ, Сентиер, ан ил. Эпĕ сан патра пĕрре лайăх хăна пулнăччĕ. Халĕ эпĕ сана хам пата хăнана чĕнетĕп.

Сентиер килĕшрĕ.

Мăрсук хăйсен килĕ умне çитсен кĕленчине кăларчĕ те Сентиере пачĕ.

– Пӳрте кĕрсен сĕтел çине кăларса ларт, – терĕ.

– Юрать, – килĕшрĕ Сентиер.

Пӳрте кĕрсенех Сентиер çур литра сĕтел çине кăларса лартрĕ.

– Кам илчĕ ку эрехе, калăр! – кăшкăрса ячĕ Туйпи.

– Эпĕ илтĕм. Сире Мăрсукпа иксĕре хăна тăвасшăн. Мĕн тесен те эпир ачаранах пĕрле ӳснĕ юлташсем-çке.

– Çук, куна Мăрсук илнĕ пулмалла. Эпĕ чухлатăп.

– Эпĕ илтĕм, – терĕ Сентиер.

– Çук, ĕненместĕп. Ахальтен хăна тăвасшăн-и? Ун пек пулмасть. Мăрсук илнĕ-тĕр.

– Апла пулсан сире хăналасси пулмасть, – терĕ те Сентиер Мăрсук панă çур литра хăйĕн кĕсйине чиксе тухса кайма тăчĕ.

– Эсĕ илнĕ пулсан çаврăн, – терĕ Туйпи, сĕтел çине çимеллисем кăларса хучĕ.

Виççĕшĕ те сĕтел хушшине вырнаçрĕç.

Мăрсукне пĕрмаях вăрçнипе, çынпа та ăшă пулманнипе Туйпие ялта "бензопăчкă" тесе ят пачĕç. Туйпишĕн ырă çын çук, кӳрши-аршине пурне те тухатмăш тесе вăрçать.

Çавăн пек арăмпа тарăхса хăшĕсем ĕçке ереççĕ. Ӳсĕрĕлсен вара мăшăрĕсем çине алă çĕклеме те именмеççĕ. Пĕр шухăшласан, арăм çине алă çĕклес пулсан каçхине вара мĕнле кăмăлпа ун çумне кĕрсе выртмалла? Тĕлĕнмелле. Ун пек чухне пĕрин хутне кĕрсе виççĕмĕшĕн çемье хушшине кĕмелле мар. Хăвах айăплă пулса юлатăн.

Çапла вăл пурнăç. Çемьере чашăктирĕк шăкăртатмасăр пулмасть. Пĕрпĕрне çилленмелле мар. Пĕри кăштах урлă-пирлĕ калаçма тытăнсан теприн чĕнмесен те юрать. Унтан ырри çук. Ун хыççăн йĕркеллĕ калаçу тытăнать. Айăпа кĕрсен каçару ыйтмалла. Пĕрпĕринпе килĕштерсе пурăннине нимĕн те çитмест. Хирĕçсе, вăрçăнса пурăнсан пурлăх та куçа курăнмасть.

– Пĕрисем калаçнине илтнĕ эпĕ. Чăн-чăн юрату çук тенĕччĕ пĕр хĕрарăм. Пĕрле çӳресе хăнăхатăн та пĕрлешсен вара тата çывăхланатăн, юрату вăл пĕр-пĕрне хăнăхни, пĕр-пĕрин кăмăлтуйăмне лайăх пĕлсе çитни тенĕччĕ.

– Эсĕ вара мĕнле шухăшлатăн, Ухтепи? Юрату пур, çук мар. Юрату мĕнле, çемье те çавăн чухлĕ çирĕпрех пулать. Юратса пĕрлешни, паллах, тĕреклĕ çемье пуçламăшĕ. Ачасем çемье тытăмне тата çирĕплетеççĕ. Темиçе авланмалла ан пултăр. Малтанхи арăм – ĕмĕр ирттерме, иккĕмĕш – чун усрама тенине те илтнĕ эпĕ. Манăн Шуçăмпипе чăн-чăн юрату пулман. Ăс вылянă вăхăт кăна пулнă. Эпĕ сана юрататăп, Ухтепи.

– Пĕр-пĕринпе юратса темиçе çул çӳреççĕ пулин те хăшĕ-пĕрин хушшинче пĕрлешнĕ хыççăн пĕрер çултанах хура кушак каçса каять.

Сентиерпе Ухтепи юрату, çемьеллĕ пурнăç çинчен çапла калаçаççĕ.

* * *

Çулталăкран Енилепе Шуçăмпин хĕр çуралчĕ, Сентиерпе Ухтепин – ывăл. Ачасем çуралнине те пĕрле паллă турĕç çамрăк мăшăрсем. Икĕ çемье хушшинче туслăх çирĕпленсех пычĕ.

### Тухтăрсем шанман...

Калифорнире пурăнакан Надя, халĕ вăл хăйне Натали тесе чĕнме ыйтать, 2008 çулта тĕнчипех чапа тухнă. Сăлтавĕ хĕрарăм варĕнче ЭКО меслечĕпе усă курнă хыççăн харăсах 8 пепке тĕвĕленнипе çыхăннă. Тухтăрсем, чăн та, пулас амăшĕ пур ачине тĕрĕс-тĕкел çуратасси пирки кăна мар, тăхăр уйăх чип-чипер çĕклесе çÿресси пирки те хытах иккĕленнĕ. Çав вăхăтрах Натали 8 шăпăрлан кĕтнине никам та пĕлмен – пĕри УЗИ аппаратне те улталама мехел çитернĕ, унтан ăнăçлă пытаннă.

Анчах та Натали парăнман, ыррине шаннă. Çапла майпа пепкесем амăшĕн варĕнче 31 эрнене çитиччен чиперех аталаннă. 2009 çулхи кăрлачăн 29-мĕшĕнче çут тĕнчене ултă арçын ача тата икĕ



2013 çулта Сулеман тинех татăклă утăм тунă – вăл "Октоанне" сăнарĕпе яланлăхах сывпуллашса çĕнĕ пурнăç пуçланă.

### Çĕнĕ пурнăç

"Хама тĕрмерен тухса тарнăнах туйрăм, – тет халĕ Натали. – Малашне те çаплах пурăнччен çука тухам, 14 ачампа урампа тăрса юлам – капла тĕрĕсрех пулĕччĕ. Пурнăçăма улăштарман тăк эпĕ, ахăртнех, тахçанах вилсе выртăттăм". Хĕрарăм пепкисемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕн килне пурăнма куçнă. Хăйĕн специальноçĕпе – консультант тата психотерапевт – ĕç тупса вырнаçнă.

Паллах, Натали пурнăçĕнчи йывăрлăхсем çакăн хыççăн вĕçленнĕ теме çук. 2014 çулта амăшĕнне усал шыçă тупса палăртнă. Хĕра-

# Хĕрарăм харăсах 8 ача çуратнă

**Надя /Натали/ Сулеман "Октоанне" ятпа ахальтен чапа тухман – вăл харăсах саккăр ача çуратнă. Çакăн хыççăн хĕрарăм хăй шоу-бизнесран каясса пĕлтернĕ. Юлашки 3,5 çул нумай ача амăшĕ чăнласах пепкисене тивĕçлĕ воспитани парас тĕлĕшпе тимлет. Çăмăл-и? Наталин пурĕ 14 шăпăрлан вĕт!**

хĕр пĕрчи килнĕ. Вĕсене кесарево мелĕпе касса илнĕ. Шăпăрлансен йывăрăшĕ тĕрлĕрен пулнă: 680 грамран пуçласа 1,5 килограмм таран. Тĕлĕнмелле те, тухтăрсен иккĕленĕвне сирсе ачасем пурте ырă-сывă çуралнă, каярахпа та аптраман. Пысăк çак йыша больницăран виçĕ уйăхран киле кăларнă. Хĕр пĕрчисене амăшĕ Малийя тата Нарийя, арçын ачасене Ноа, Исайя, Джона, Макаи, Джозая тата Джеремайя ят хунă.

### ...çынсем ăнланман

Çак хыпара Америка общественноçĕ хурласа йышăннă. Чи малтанах, Натали пĕччен амăшĕ пулнă, вăл капла та ултă ача ÿстернĕ: аслă ывăлĕ Элайджа 2001 çулта çуралнă. Унсăр пуçне хĕрарăмăн пепкисен йышĕнче йĕкĕрешсем те пулнă. Пур шăпăрлан та çут тĕнчене ЭКО пулăшăвĕпе усă курса килнĕ.

Çав вăхăтрах хĕрарăм ниçта та ĕçлемен, патшалăх пособине илсе тăнипе кăна йÿнĕçтеркеленĕ. Пысăк йыш пĕчĕк хваттерте Натали ашшĕ-амăшĕпе пурăннă. Ку çитмен, хĕрарăмăн ашшĕ эрех-сăра сыпкалама юратнă. Çакăн пек лару-тăрура нумай ача мĕн тума кирлĕ? Çак ыйтăвăн хуравне никам та пĕлмен. Апла тăк, пĕртенпĕр верси – пособи тата ытларах илмелле, налук тÿлекенсен укçи-тенкипе пурăнмалла. Наталин ăс-тăнĕ йĕркеллех марри пирки те сас-хура сарăлнă.

Шăв-шав çуралмашкăн тата пулнă-ха сăлтав. ЭКО вăхăтĕнче хĕрарăм варне 12 эмбрион вырнаçтарнă. Вĕсенчен 8-шĕ амăшĕн варĕнче çакланса юлма пултарнă. Нормативпа килĕшÿллĕн вара кун пек чухне 2-3 эмбрион кăна вырнаçтармалла. Искусствăллă майпа çие хăварма пулăшнă тухтăр Майкл Камрава çирĕплетнĕ тăрăх, нормăна пăсмашкăн пулас амăшĕ хăй хистенĕ. Пациента итлесе унăн ыйтăвне тивĕçтерни шурă халатлишĕн инкекпе вĕçленнĕ – унăн медицинăри карьерăпа сывпуллашма, лицензие тавăрса памашкăн тивнĕ.

### Нумай пепке пирки ĕмĕтленмен

41 çулти Натали пĕрремĕш хут The Daily Mail кăларăма интервью панă, çынсене канăçсăрлантаракан лару-тăрăва шăпах çавăн чухне усăмлатнă. Хĕрарăм каланă тăрăх, 2008 çулта хăй Камрава клиникине пулăшу ыйтма пынă чухне 8 ача пирки унăн пĕр шухăш та пулман. Натали пĕр /!/ пепке пирки кăна ĕмĕтленнĕ.

"Эпĕ эрех ĕçме юратакан аттепе çитĕннĕ, – каласа кăтартнă хĕрарăм. – Çемьере пирĕн лăпкă та, хăрушсăр та пулман. Манăн вара ыттисен пекех йĕркеллĕ пурнăç килетчĕ – лăпкă лару-тăру хуçалантăр унта, ыранхи куна шанăçпа кĕтме май пултăр. Эпĕ çак вăхăталла шăпах вĕренсе тухнăччĕ. Хамăн вăя туяттăм – 7 ачана ура çине тăратма пултаратăм эпĕ".

Натали тата çакна каласа кăтартнă – ЭКО малтанхи операцийĕсен вăхăтĕнче те унăн варне икĕ е виçĕ мар, харăсах ултă эмбрион вырнаçтарнă. Хĕрарăмăн организмĕн хăйне евĕрлĕхĕпе çыхăннă ку. Вĕсенчен амалăхра яланах пĕри кăна çакланса юлма пултарнă. Пĕр тĕслĕхре кăна йĕкĕреш çуратнă Натали. Хальхинче вара Камрава темшĕн хăраса ÿкнĕ – вăл ултă эмбрионран пĕри те хырăмра тĕвĕленмессе шухăшланă. Çавăнпах Наталие алă пусса çирĕплетме ыйтнă – тепĕр улттăшне унăн варне хĕрарăм хăй ыйтнипе килĕшнипе вырнаçтараççĕ имĕш.

Çакна операци сĕтелĕ çинчех пурнăçланă. Камрава каланă тăрăх, малтанхи парти йăлт пăрахăçланма пултарать иккен. Сĕтел çинче выртакан хĕрарăм хута пăхмасăрах алă пуснă. Эмел витĕмĕнчи Натали хăй мĕн пирки килĕшнине те ăнланман.

### "Октоанне"

"Çие юлнăранпа 17 эрне çитсен манăн хырăмра... 7 ача йăшăлтатнине каласан чутах тăнсăр пулса кайса ÿкеттĕм, ун чухне 7-шĕ кăна курăннă-ха, – каласа кăтартнă хĕрарăм. – Нимĕн пĕлми-ăнланми пулса лартăм".



Анчах та çут тĕнчене 7 кăна та мар, 8 пепке килнĕ. Çакăн хыççăн чапа тухнă та "Октоанне" тата медиа-персона. Наталие телешоусене чĕннĕ, вăл интервью хыççăн интервью панă, глянец хуплашкаллă журналсем ăмăртса тенĕ пек унăн сăнÿкерчĕкне пичетленĕ. Натали темиçе хутчен те пластика операцийĕ тунă, çакăн хыççăн стрип-клубсенче ташлама пуçланă. Нумай ачаллă амăшĕ хăйне çапла тыткалани, паллах, нумайăшне килĕшмен.

Наталирен амăшĕн правине туртса илес енĕпе ĕç пуçарнă. Критиксен шухăшĕпе, хĕрарăм ачисене пачах та пăхман. Натали хăй те лару-тăрăва хĕртсе кăна тăнă. Интервьюсенчен пĕринче вăл хăй ачасене чăтма пултарайманнине каланă. "Манăн вĕсенчен ăш пăтранать... Эпĕ, паллах, вĕсене юрататăп, анчах та вĕсем пулман тăк аванрахчĕ". Наталие суда тата панă – патшалăх пособийĕсем тата ыркăмăллăх фончĕн пулăшăвĕ тĕлĕшпе улталать-мĕн.

### Тĕпсĕр хура шăтăк

Анчах та Натали çак çул çине çăмăл пурнăçран тăманни ахалех паллă. Апла-и, капла-и – 14 ачине тăрантармалла-тумлантармалла-çке-ха унăн! "Эпĕ пĕтĕм вăя пухса укçа-тенкĕ ĕçлесе илме тăрăшаттăм. Сĕтел çинчен çăкăр татăкĕ ан кайтăр теттĕм. Мана кирек те мĕнле пĕччен амăшĕ ăнланĕ, – тенĕ Натали. – Пурте мана патшалăх тивĕçлипех пулăшнине ĕненеççĕ. Анчах та эпĕ йăлтах хам ĕçлесе илетĕп, хамăн кĕсьерен тÿлетĕп. Çавăнпах тăватă çул "Октоанне" пулма та тиврĕ манăн.

Çак çулсене чăтса иртерме çăмăл пулман хĕрарăма. Хăй тĕрĕс мар пурăннине ăнланнă-ха вăл. Чунĕ те пушанса юлнă унăн çак тапхăрта. Хăйне курайми пулса çитнĕ Натали. "Эпĕ таçта тĕпсĕр хура шăтăка анса каятăп пек, хама шалтан аркататăп пек", – аса илнĕ çав тапхăра вăл. Нерв хĕлĕхĕсем пĕр вĕçĕм карăннине пула Натали лăплантаракан эмел ĕçме пуçланă та... текех унсăр пурăнма та пултарайман.

рăм хĕрĕн аллинчех вилсе кайнă. Ĕçкĕç ашшĕ çакăн хыççăнах пусма çинчен ÿксе хускалайми аманнă. Халĕ арçынна ятарлă клиникăна вырнаçтарнă, унта лайăх пăхаççĕ. Анчах та çакăншăн укçа тÿлемелле-çке.

Натали ачисем те хăйне евĕрлĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ, аслисем – аутист. Эйдана пĕр самантлăха та пĕччен хăварма юрамасть. Наталин хăйĕн те сывлăхĕ хавшанă – варта 8 ача йăтса çÿренипе çыхăннă ку. Çурăм шăмми çак çĕклеме пула самай аманнă, халĕ хĕрарăм хытах ыратнипе асапланать.

Анчах та Натали – парăнакансенсен йышĕнчен мар. "Манăн ачасем валли вăйлă пулмалла, – тет хĕрарăм. – "Октоанне" сăнарне калăпланă чухне манăн мĕн тума тивнине вĕсенчен пытармастăп эпĕ. Пепкемсене яланах тĕрĕссине кăна калатăп. Хам ырах мар тата намăс ĕçсем пурнăçланине те пытармастăп. Анчах та мана ачасем: "Анне, пурте йĕркеллĕ, эпир сана юрататпăр тата яланах юратăпăр", – терĕç. Эпĕ пурнăçра чылай йăнăш турăм. Анчах та пепкемсем – йăнăш мар".

Халĕ Натали пурнăçне ачисене халаллать. Урăх нимĕн валли те вырăн та, вăхăт та çук унта. Нумай ачаллă амăшĕ ирхи пиллĕкре тăрса апат хатĕрлет. Унтан пепкисене шкула леçет. Кăнтăрла хыççăн вĕсене кайса илет, татах апат хатĕрлет, киле панă ĕçсене пурнăçлама пулăшать. Каç пулсан шăпăрлансене çывăрма выртарать.

Çут тĕнчене харăс саккăрăн килнисем халĕ 7,5 çула çитнĕ. Вĕсем, амăшĕ пекех, какайсăр апат çиеççĕ, сывă пурнăç йĕркине пăхăнаççĕ, спортпа туслă. Амăшĕ каланă тăрăх, саккăрăшĕ те вĕсем – пĕр команда, кил тĕрĕшри ĕçсене пурнăçламашкăн пулăшаççĕ, Эйданшăн та вĕсем – чăн-чăн тĕрек.

"Эпĕ сывă та телейлĕ ачасем ÿстерме ĕмĕтленетĕп. "Октоанне" йышши хăрушă та намăс сăнар – пурнăçра пулмалла маррин тĕслĕхĕ. Çак сăнара пуринчен ытла хам курайместăп", – тет хĕрарăм.

/Deti.mail.ru/.

– Анне, тĕнчери чи лайăх хĕрĕн амăшĕ пулма йывăр мар-и?

– Пĕлместĕп, кукамунтан ыйт.

* * *

– Фу, кам унта усал йытă пек ÿлет?

– Эпĕ-ха ку, анне...

– Э, эсĕ-им, ылтăнăм? Юрлах, шăпчăкăм!

* * *

– Анне, эсĕ пĕчĕк чухне шкула çÿренĕ-и?

– Паллах.

– Мана кампа хăварнă вара хăв вĕренме тухса кайсан?

* * *

– Сирĕн савăт-сапа çумалли машинăна юсава илсе кайма тивет.

– Анне, сана илме килчĕç!

* * *

– Анне, эпир халĕ кăна иртсе кайнă станци мĕн ятлă?

– Пĕлместĕп. Кĕнеке вулама ан чăрмантар-ха.

– Шел. Халĕ шăллăма мĕнле шыраса тупăпăр ĕнтĕ? Вăл эсĕ куриччен шăпах унта тухса юлчĕ.

* * *

– Анне, ку упăте-и? – ыйтать амăшĕпе пĕрле зоопарка кайнă пĕчĕк арçын ача.

– Çук-ха, ку кассир кăна...

* * *

Арçын ача урамра вылять.

– Вовочка, киле кĕме вăхăт, – чĕнет амăшĕ чÿречерен.

– Анне, эпĕ шăнса кайнă-и?

– Çук, санăн хырăму выçнă.

* * *

Пепке макăрать те макăрать. Амăшĕ мĕн тумаллине те пĕлмест. Ача кипкисем типĕ, хырăмĕ тутă...

– Анне, аист шăллăма илсе килнĕ чухне унпа мĕнле усă курмаллин инструкцине парса хăварма маннă-им? – тĕлĕнет Вовочка.

* * *

– Эсĕ сĕрме купăс каласан эпĕ сана эскимо илсе парăп, – астарать амăшĕ ывăлне.

– Çук, анне, эпĕ сĕрме купăс каламасан кÿршĕ мана виçĕ эскимо илсе паратăп терĕ.

* * *

Зоопаркра.

– Анне, атя слон илетпĕр.

– Мĕн çитерĕпĕр-ха ăна?

– Нимĕн те. Кунта çырса хунă вĕт: "Слона çитерме юрамасть".

* * *

– Укçа пĕтрĕ, паян нимĕн туянса пама та ан ыйт-ха мăнукăм, юрĕ-и?

– Юрать, нимĕн те ЫЙТМĂП. Хăв мĕн туянса парăн – çавăнпа çырлахăп.

* * *

– Асанне, атя зоопаркла вылятпăр.

– Манăн мĕн тумалла пулатьха?

– Эпир – упасем, эсĕ – пире читлĕхе канфет ывăтса паракан карчăк.

* * *

Пуйăсра икĕ кинемей калаçса пырать.

– Эпĕ Мускава мăнук патне каятăп-ха, – тет пĕри.

– Эпĕ вара Мускавран мăнук патĕнчен таврăнатăп, – пĕлтерет тепри.

* * *

Асламăшĕ мăнукне сăпка юррипе çывăратасшăн. Юрлатьюрлать... Пĕр сехет иртет, иккĕ, виççĕ... Ывăнсах çитет те кăштах канса илме шухăшлать.

– Халĕ çывăрма юрать-и? – тет мăнукĕ кусне уçса.

**☺И-ХИ-ХИК☺**

* * *

Автобусра каччă чăмлак чăмласа тăрать. Ăна хирĕç кинемей ларать.

– Тем калатăн ĕнтĕ... Нимĕн те илтместĕп-çке, – тет кинемей каччă çине пăхса.

* * *

– Сунасланă чухне çăвара алăпа та пулин хуплас пулать, – вĕрентет кукамăшĕ мăнукне.

– Нимех те мар, манăн шăлсем хамăн – тухса ÿкмеççĕ, – хуравлать лешĕ.

* * *

– Манăн çуралнă кун хăçан?

– Мĕншĕн ыйтатăн?

– Хăçантан пуçласа манăн лайăх хĕрача пулма пуçламаллаши тетĕп те...

* * *

– Тухтăр, чĕре хыттăн-хыттăн тапать, кăкăрта хĕстерет, сывлама та йывăр... Калăр-ха: юрату мар-и ку?

– Çук, бронх астми.

* * *

– Тухтăр, куç умĕнче пĕр вĕçĕм сĕмĕс упкăсем явăнаççĕ...

– Эсир мĕнле тĕсе килĕштеререх паратăр вара?

* * *

– Манăн сулахай хăлха сылтăмминчен начартарах илтме пуçларĕ.

– Мĕн тăвас тетĕн, çулсем иртеççĕ çав, ватлăх çывхарать.

– Эсир мĕн, манăн сулахай хăлха сылтăмминчен ватăрах тесе каласшăн-им?

* * *

Тухтăр патне макăракан икĕ хĕрача пынă.

– Мĕн пулнă? – ыйтать хайхи пĕринчен.

– Эпĕ хăмпă çăтса ятăм...

– Эсĕ тата мĕншĕн макăратăн? – тĕпчет теприне.

– Хăмпăвĕ манăнччĕ-ĕ-ĕ...

* * *

Тухтăр – чирлине:

– Сирĕн çăкăр тата какай çиме юрамасть.

– Пельмень юрать-и?


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÿСЕМ

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
**НА 3, 6-7 ЭТАЖАХ**
Дома печати. Справки по телефонам: 28-83-64, 28-83-70, 56-04-17.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

44 çулти арçын ялта пурăнма килĕшекен сăпайлă, ырă, хитре, усă кăмăллă чăваш хĕрарăмĕпе çемье çавăрасшăн. Т. 8-927-840-13-83.

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Песок, ОПГС, щебень, кирпич; **КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Высокое качество. Доставка манипулятором. Без выходных. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **полнотелые** 20х20х40. Доставка. Разгрузка. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**15.Кирпич** любой. Т. 8-961-339-33-63.

**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 8-905-346-56-71.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 8-917-675-75-28.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, колодезные **кольца.** Т. 8-903-346-85-56.

**27.КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ керамзитобетонные.** Доставка. Манипулятор. Т. 89033220208.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ. Бесплатно:** замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.

**142.Окна – дёшево.** Т. 8-927-668-43-82.

**158.Прицеп мотоблока и трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**214.КЕРАМБЛОКИ** /40х20х20,40х12х20, 40х9х20/ пропаренные, вибропрессованные – недорого. Доставка. **Т. 8-917-677-68-46.**

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Тел. 8-962-599-47-06.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**612.Закупаем ПОРОСЯТ** – 5-20 кг. Т. 8-967-791-89-05.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**36.Олег Боголюбов** маг, экстрасенс, хиромант. Поможет в решении семейных и финансовых проблем. Исправление судьбы. Снятие любых порч и проклятий. **Т. 8-906-380-86-28.**

**38.Чистка колодцев, скважин.** Водоснабжение. Т. 89674715070.

**43.Бурение скважин** «под ключ». Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**51.Бурение колодцев. Кольца колодезные** замковые, качественные. Доставка. Скидки. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**53.Изготовление ЛЕСТНИЦЫ** /дуб, хвоя, береза/. Т. 89176623494.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.


# Пăр керменĕ



**Швецири Лапландире Кирун хули çывăхĕнче пăртан кермен çĕкленĕ.**

Тĕрĕссипе, ăна 1989 çултах тунă. Анчах та ун чухне вăл вăхăтлăх кăна пулнă. Çуркунне кермен ирĕлсе пăсланнă, кашни кĕркунне ăна çĕнĕрен хăпартнă. Çапла – кăçалчченех.

Кăçал вара унта çĕнĕ хăна çурчĕ хута кайнă – IceHotel 365. Вăл, пăртан кăна тытăнса тăрать пулин те, хăнасене çулталăкĕпех йышăнать. Калăпăр, ăна çĕклемешкĕн Турнеэльвенран 3000 литр шыв усланă. Пăртан тунă çурт шăпах çак юханшыв хĕрринче вырнаçнă. Пăр керменĕн дизайнне хатĕрлемешкĕн тĕнче тĕрлĕ кĕтесĕнчи вун-вун архитектор, дизайнер, художник хутшăннă. Çавăнпах унăн кашни пÿлĕмĕ хăйне евĕр пулса тухнă. Тĕлĕнтермĕш кермен лаптăкĕ – 1200 тăваткал метр, унта çирĕм ытла пÿлĕм, бар, картина галерейи. Шалта – 6 градус сивĕ тытса тăраççĕ. Ятарлă панельсене тата сивĕтмĕше пула çак тĕллеве пăхăнма йывăр мар.

IceHotel 365 экстремаллă канăва килĕштерекен 50000 туриста йышăнма пултарать. Сăмах май, унта çĕр касма кирек кам та пултарать – сывлăхшăн сиенлĕ мар ку. Пĕр кас хакĕ – 250 евро. Йÿнех мар, çапла-и? Анчах "пăрлă касшăн" тÿлеме хатĕррисен черечĕ – кĕске мар...

/"http://esoreiter.ru"/.

## 46-мĕш номерте пичетленнĕ сăмахкаçмăш хуравĕсем

**Сылтăмалла:** 1. Канаш. 5. Акара. 9. Тара. 10. Раса. 12. Хурама. 13. Рама. 14. Ата. 15. Кама. 16. МОК. 17. Латăн. 19. Аванс. 20. Агава. 23. Патак. 26. Тум. 27. Аван. 28. Ира. 29. Арак. 30. Алакер. 32. Урал. 33. Авас. 34. Ахаль. 35. Серна.

**Аялалла:** 1. Кахал. 2. Нара. 3. Ара. 4. Шаман. 5. Арама. 6. Караван. 7. Асамат. 8. Аракс. 9. Тута. 11. Амон. 15. Кăвакал. 18. Тамара. 20. Атака. 21. Гуру. 22. Аваль. 23. Палас. 24. Арес. 25. Карта. 28. Икар. 31. Аве.


**« ХЫПАР »**
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

4 627126 799869

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор **М.М.АРЛАНОВ**

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:**
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:**
55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 16.12.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 7101. Заказ 4458.